Ц. Б. им. Горького

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 МАЙ 18 ЙУНКУН 112 (4925) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухат — ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ — Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

РСФСР Верховнӑй Советне Чӑваш халӑхӗнчен пӗрремӗш кандидат — *Иосиф Виссарионӑвич СТАЛИН*

Шупашкар суйлав округӗ

Шупашкарти „Авторемонт“ савӑтӗнчи рабочисен, служӑщисен тата инженерла-техникла работниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ РСФСР Верховнӑй Советне суйлама

Иосиф Виссарионӑвич Сталин

тата

Перасковйа Иванӑвнӑ Калинкина

йултащсен кандидатурисене тата ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Варфоломей Тихӑнӑвич Харитонӑв

йултащ кандидатурине тӑратнӑ

Пухура 127 ҫын пулнӑ

Майӑн 17-мӗшӗнче 4 сехетре Шупашкарти „Авторемонт“ савӑтӗнчи рабочисен, служӑщисен тата инженерла-техникла работниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулчӗ. Пухура РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе-йаврӗҫ.

Пӗрремӗш сӑмаха савӑтри стахановла йухӑма пуҫаракан, моторист, партире мар большевик Александр Николайӗвич Сапожникӑв йултащ илет. Вӑл РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама халӑхсен сулпуҫӗн Иосиф Виссарионӑвич Сталин кандидатурине тата Шупашкар хула совет председателӗн Прасковйа Иванӑвнӑ Калинкинӑн кандидатурине тӑратма сӗнет.

Стахановец-токарь Иван Федӑрӑвич Перошкин Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Чӑваш пединститут директорӗн Варфоломей Тихӑнӑвич Харитонӑвӑн кандидатурине тӑратат.

Савӑтри рабочисем, служӑщисем тата инженерла-техникла работниксем Сапожникӑвпа Перошкин йултащсен сӗнӗвӗсене тӑвӑллӑн ала ҫупса кӗтсе илеҫҫӗ.

[illegible]

Йултащсем! Епӗр союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама кандидата большевиксен парти ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлекен ҫирӗп ҫынсене, Совет халӑхӗн телейӗшӗн вирлӗн кӗрешекен ҫынсене кӑна тӑратма тивӗҫ. Епӗ РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама халӑхсен аслӑ ҫулпуҫне тата тусне Иосиф Виссарионӑвич Сталин йултаща кандидата тӑрататӑп. **(Тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ).**

Сталин йултащ пире телейлӗ пурнӑҫ туса пачӗ, ҫавӑнпа епӗ ӑна РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӑрататӑп.

Аса илӗр-ха Чӑваш халӑхӗн иртнӗ ылханлӑ пурнӑҫне. Чӑваш халӑхӗ ӗлӗк йӑвӑр пусмӑрлӑхра, тӗттӗмлӗхре, пурӑннӑ, унран вӗҫӗ-хӗррисӗр мӑшкӑлана.

Халӗ, Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе, Чӑваш халӑхӗ, Совет Союзӗнчи ытти мӗн пур халӑхсемпе пӗрле, ирӗклӗ те савӑнӑҫлӑ пурӑнӑҫпа пурӑнат.

Тата епӗ РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама батрачкӑ пулнӑскере, Чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ хӗрне, Шупашкар хула совечӗн председательне Перасковйа Иванӑвнӑ Калинкина йултаща кандидата тӑрататӑп. **(ала ҫупаҫҫӗ).**

Епӗ сирӗнтен ман сӗнӳшӗн тӑма ыйтатӑп: Сталин йултащран **(Тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ)**, ҫавӑн пекех тата Калинкинӑ йултащран РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйланма пирӗн Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтатӑп. **(Тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ).**

Шупашкарти „Авторемонт“ савӑтри рабочисен, служӑщисен тата инженерла-техникла работниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑнна ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене депутатсем суйлама кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Шупашкар суйлав округне тата ЧАССР Верховнӑй Советне суйламали Шупашкарти виҫҫӗмӗш суйлав округне кӗрекен „Авторемонт“ савӑтри рабочисемпе служӑщисен тата инженерла-техникла работниксен пӗрлехи пухӑвӗ ҫапла йышӑнат:

1. Шупашкар суйлав округӗ тӑрӑх РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата тӗнчери чи демократиллӗ Конституци тӑвакана Иосиф Виссарионӑвич Сталин йултаща тӑратас.

РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Калинкина Перасковйа Ивановнӑна, Шупашкар хула совечӗн председательне, — 1901 ҫулта ҫуралнӑ, ПСК(б)П членӗ, Шупашкар хулинче пурӑнат, — тӑратас.

2. Иосиф Виссарионӑвич Сталин тата Калинкина Перасковйа Ивановнӑ йултащсенчен пирӗн суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтас.

3. ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Харитонӑв Варфоломей Тихӑнӑвича, Пединститут директорне, — 1905 ҫул ҫуралнӑ, ПСК(б)П членӗ, Шупашкар хулинче пурӑнат, — тӑратас.

4. Харитонӑв Варфоломей Тихӑнӑвич йултащран Шупашкарти виҫҫӗмӗш суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтас.

Столицӑри суйлав округӗсенче

Мускаври суйлав округӗсенче РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидатсем палӑртас йатпа суйлав умӗнхи пухусем пысӑк ҫӗкленӳпе пулса иртеҫҫӗ.

Виҫӗ кун хушшинче суйлав умӗнхи пухусем Сталински районӗнчи 140 предприйатире пулса иртнӗ, вӗсенче 125 пине йахӑн ҫын пулнӑ. Пур ҫӗрте те пӗр шухӑшлӑн пулса РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама палӑртнӑ Сталин йултащ кандидатурипе тӑма пулни ҫинчен постановленисем йышӑннӑ.

Микойан йачӗпе тӑракан апат-симӗҫ комбинатӗнчи коллективан (Бауманси суйлав округӗ) суйлав умӗнхи пухӑвӗ, пухура 1.700 ҫын пулнӑ, РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама хайсен кандидатне асла Сталинӑн шанчӑклӑ соратникне—ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместительне Анастас Иванӑвич Микойана палӑртнӑ.

Капранӑвӑ йачӗпе тӑракан хапрӑкри (Герценски суйлав округӗ) рабочисен, инженерсемпе техниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ хӑйсен кандидатне пирӗн социализмлӑ тӑван ҫӗршывӑн патриотне, совет аслӑлӑхӗн представительне—партире мар большевика, Мускаври Государства университетӗнчи математика професорне Сергей Львович Собалӗва, 1908 ҫулта ҫуралнӑскерне, палӑртнӑ.

Октябрьски чукунҫул ҫинчи Сталински мастерскойсенчи коллективӑн (Чукунҫул суйлав округӗ) 3 пин ҫынлӑ пухӑвӗнче РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата паллӑ стахановец, кривоносовец-машиниста, участокри суйлав комиҫҫи членне, совет халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлне Ильйа Захарӑвич Бодылӗва палӑртнӑ.

„Хӗрлӗ пролетарий“ хапрӑкӗнчи рабочисен суйлав умӗнхи пухӑвӗнче пичетлекен цех начальникӗ Попов йултащ тухса каланӑ. Вӑл ҫапла каланӑ:

—„РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама пирӗн Ленин—Сталин партийӗн ӗҫне чӗререн йуратакан ҫынна, асла вырӑс халӑхӗн ирӗкне пурнӑҫа кӗртме пултаракан ҫынна палӑртма тивӗҫ. Ун пек ҫын каменщик-орденоносец Петр Семенӑвич Орлов пулса тӑрат“,—тенӗ.

Пухура пулнӑ 2.500 ҫын пурте пӗр шухӑшлӑн пулнипе Орлов йултащ кандидатуришӗн сасӑланӑ.

(ТАСС).

Вӑрнар тата Елӗк суйлав округӗсенче

Елӗк районӗнчи А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхоз членӗсен суйлав умӗнхи пухӑвӗ РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Андрей Александрӑвич Жданӑв

тата ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Пелагейа Ҫергейевнӑ Меценатӑвӑ

кандидатурине тӑратнӑ.

Пухура 64 колхозник пулнӑ

Майӑн 16-мӗшӗнче Елӗк районӗнчи Синерти Жданӑв йачӗпе тӑракан колхозра РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене депутата суйлама кандидатсем тӑратас тӗлӗшпе колхозниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху пысӑк активлӑхпа иртрӗ. Волкӑв Ваҫилий Илларионӑвич РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутатне суйлама кандидата Вӑрнар суйлав округӗ тӑрӑх Андрей Александрӑвич Жданӑва тата Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Елӗк суйлав округӗ № 27 тӑрӑх ПСК(б)П райкомӗн ҫекретарне—Пелагейа Ҫергейавнӑ Меценатӑвӑ йултаща тӑратма сӗннине колхозник-суйлавҫӑсем пӗр кӑмӑллӑ пулса йышӑнчӗҫ.

Волкӑв йултащ сӑмахӗ

Колхозник - йултащсем! Епӗ РСФСР Верховнӑй Советне Вӑрнар суйлав округӗ тӑрӑх депутата суйлама кандидата ПСК(б)П Тӗпкомӗн ҫекретарне тата ПСК(б)П Ленинград Обкомӗпе хула комитечӗн ҫекретарне Андрей Александрӑвич Жданӑв йултаща тӑрататӑп. Пирӗн колхоз унӑн йачӗпе хисепленсе тӑрат.

Жданӑв йултащ Сталин йултащӑн чи тӗрӗс соратникӗ пулса тӑрат. Ӑна пирӗн колхозри старик семпе ҫамрӑксем пурте лайӑх пӗлеҫҫӗ, вӑл 1932 ҫулта пирӗн колхозра пулса пире пирӗн колхоз хуҫалӑхне ҫӗклес тӗлӗшпе чылай конкретлӑ катартусем парса хӑварчӗ. Жданӑв йултащ пирӗн тӑван ҫӗршывӑн чи лайӑх ҫынни пулса тӑрат, вӑл халӑх шаннине пӗтӗмӗшпех тӳрре кӑларӗ.

Чӑваш республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата епӗ парти райкомӗн ҫекретарне Пелагейа Ҫергейӗвнӑ Меценатӑвӑ йултаща тӑрататӑп. Ӗҫре большевикла йертсе пынипе тата ҫынсем ҫине тимлӗн пӑхнипе Меценатӑвӑ йултаща халӑх хисеплет тата йуратат.

Кун хыҫҫӑн тухса каланӑ К. Киселӗв, В. Петрикӑв, Д. Л. Волкӑв, П. П. Петрикӑвӑ, 60 ҫулхи колхозница О. Алексейӗвӑ йултащсем Волкӑв йултащ сӗнӳне пӗр кӑмӑллӑн пулса йышӑнчӗҫ.

Елӗк районӗнчи А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсен суйлав умӗнхи пухӑвӗ йышӑнна ПОСТАНОВЛЕНИ

Вӑрнар суйлав округӗ тӑрӑх Российа Советлӑ Социализмлӑ Федерациллӗ Республикӗн Верховнӑй Совет депутатне суйлама Синерти А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхозниксемпе колхозницӑсенчен кандидат тӑратасси ҫинчен сӳтсе йавсан, колхозниксен пухӑвӗ йышӑнат:

1. РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйлама Вӑрнар суйлав округӗ тӑрӑх Сталин йултащӑн чи лайӑх вӗренекенне, ПСК(б)П Тӗпкомӗн, Ленинград Обкомӗпе хула комитечӗн ҫекретарне, 1896 ҫулта ҫуралнӑ, 1915 ҫултанпа ПСК(б)П ретӗнче тӑракан, Ленинград хулинче пурӑнакан Андрей Александрӑвич Жданӑв йултаща тӑратас.

2. Колхозниксемпе колхозницӑсен пухӑвӗ Андрей Александрӑвич Жданӑв йултаща РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйланма Вӑрнар округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтат.

Елӗк районӗнчи А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсен суйлав умӗнхи пухӑвӗ йышӑнна ПОСТАНОВЛЕНИ

Епӗр Елӗк районӗнчи Синерти А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхозниксем, Елӗк суйлав округӗ тӑрӑх Чӑваш АССР Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидата ПСК(б)П Елӗк райкомӗн пӗрремӗш ҫекретарне, 1903 ҫулта ҫуралнӑ, 1929 ҫултанпа ПСК(б)П ретӗнче тӑракан, Чӑваш АССР-чи Елӗк йалӗнче пурӑнакан Пелагейа Ҫергейӗвнӑ Меценатӑвӑ йултаща пурте пӗрсасӑлӑн тӑрататпӑр.

Меценатӑвӑ йултащ—массӑсен лайӑх организаторӗ, социализмла общӗствӑ тӑвас ӗҫе активлӑн хутшӑнса ӗҫлекен, Ленин—Сталин партин асла ӗҫӗшӗн пӗтӗм вӑйне хурса ӗҫлекен ҫын.

А. А. Жданӑв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсен пухӑвӗ П. Ҫ. Меценатӑвӑ йултаща Чӑваш АССР Верховнӑй Совет депутатне суйланма Елӗк суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтат.

Шупашкар суйлав округӗ

Шупашкарти типографири рабочисен, инженерла-техникла работниксен тата служӑщисен суйлав умӗнхи пухӑвӗ РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Перасковйа Иванӑвнӑ Калинкина

кандидатурине

тата ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама

Варфоломей Тихӑнӑвич Харитонӑв

кандидатурине тӑратнӑ.

Пухура 250 ҫын пулнӑ.

Епӗр, майӑн 17-мӗшӗнче, типографинчи (Шупашкар хули) рабочисемпе работницӑсен тата инженерсемпе техниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен депутатне суйлама кандидатсем тӑратас ыйтӑва сӳтсе-йаврӗҫ. Типографинчи рабочисен йачӗпе Сорокин йултащ тухса сӑмах каларӗ. Вӑл хайӗн сӑмахӗнче РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидата Сталин йултаща тата унӑн ҫывӑх соратникӗсене палӑртни ҫинчен каласан пухӑва пухӑннӑ рабочисем тӑвӑллӑн ала ҫупаҫҫӗ. Сорокин йултащ пирӗн республика ҫитӗнӗвӗсем ҫинчен, епӗр вӑл ҫитӗнӳсене коммунистсен партийӗ йертсе пынипе туни ҫинчен калат.

Сорокин йултащ типографинчи рабочисен йачӗпе РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама Шупашкар хула совет председательне Калинкина йултаща кандидата тӑратма сӗнет. Вӑлах ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама Чӑвашсен пединститут директорне Харитонӑв йултаща палӑртма сӗнӳ парат. Пуху Сорокин йултащ сӗнӳне хапӑл туса йышӑнат.

Шупашкарти 1-мӗш номерлӑ типографири рабочисен, работницӑсен, инженерсемпе техниксен суйлав умӗнхи пухӑвӗ йышӑнна ПОСТАНОВЛЕНИ

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен депутатне кандидатсем тӑратасси ҫинчен сӳтсе-йавнӑ хыҫҫӑн, епӗр, типографири рабочисем, работницӑсем, служӑщисем, инженерсемпе техниксем ҫапла йышӑнатпӑр:

Епӗр, типографинчи рабочисем, работ..., инженерсемпе техниксем, РСФСР Верховнӑй Совет депутатне суйлама кандидата Ленин ӗҫне малала шанчӑклӑн туса пыракан, тӑшмансене хирӗҫ нимӗн хӗрхенмесӗр кӗрешекен, хайӗн халӑхне чӗререн йуратакан, Совет Союзӗнчи халӑхсен, пӗтӗм тӗнчери ӗҫ ҫыннисен ҫулпуҫне, тӗнчери чи демократиллӗ Конституци туса паракан, — вӑл йертсе пынипе пирӗн ҫӗршыв хӑватлӑ социализмлӑ державӑ пулса тӑнӑ, — Иосиф Виссарионӑвич Сталин йултаща палӑртнине саламлатпӑр.

Ҫавӑн пекех епӗр Сталин йултащӑн ҫывӑх соратникӗсене, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн генилӗ кӗрешекенсене: Молотӑв, Калинин, Ворошилӑв, Каганович, Жданӑв, Иежов йултащсене РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата палӑртнине саламлатпӑр.

Епӗр, типографири рабочисем, работницӑсем, инженерсемпе техниксем, РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Чӑваш халӑхӗн чи лайӑх хӗрне, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн вайне хурса ӗҫлекене, Шупашкар хула совет председательне, — ПСК(б)П членӗ, 1901 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкар хулинче пурӑнат — Перасковйа Иванӑвнӑ Калинкина йултаща палӑртатпӑр.

... Верховнӑй Советне депутата суйланма Шупашкарти № 718 суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пама ыйтатпӑр.

ЧАССР Верховнӑй Совет депутатне суйлама Чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлне, Ленин—Сталин асла парти ӗҫӗшӗн пӗтӗм вайне хурса ӗҫлекене, Чӑваш пединститут директорне, — ПСК(б)П членӗ, 1905 ҫулта ҫуралнӑ, Шупашкар хулинче пурӑнат,—Варфоломей Тихӑнӑвич Харитонӑв йултаща палӑртатпӑр. Пуху Харитонӑв йултащран Чӑваш АССР Верховнӑй Советне депутата суйланма Шупашкарти 3 №-лӗ суйлав округӗнче баллотировкӑна тӑма хайӗн килӗшӳне пама ыйтат.

Епӗр РСФСР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Калинкина йултаща ЧАССР Верховнӑй Советне депутата суйлама кандидата Харитонӑв йултаща палӑртса, ийунӗн 26-мӗшне производствӑра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тунипе кӗтсе илме пулатпӑр.

И. В. Сталин тата А. И. Микойан йултащсем Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ панӑ

Йереван, майӑн 12-мӗш. (ТАСС). С. М. Кирӑв йачӗпе тӑракан „Совпрен“ — СК комбинатӗнчи виҫӗ пинлӗ коллектив Сталин йултащ патне Йереван хулинчи 1 мӗш номерлӗ СК суйлав округӗ тӑрӑх Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ ыйтса ҫырса йанӑ.

Майӑн 14 мӗшӗнче суйлавҫӑсем йуратнӑ ҫулпуҫ килӗшӳ пани ҫинчен пӗлтерӳ илнӗ. Ҫаканпа пӗрлех Йереванри конҫервӑ тӑвакан савӑтри суйлавҫӑсем ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ Микойан йултащ Йереван хулинчи савӑт суйлав округӗ тӑрӑх Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ панине илнӗ.

Суйлав комиҫҫисем И. В. Сталин тата А. И. Микойан йултащсен кандидатурисене регистрациленӗ.

Хулари предприйатисенче каҫхи ҫменӑра ӗҫлекен рабочисен митингӗсем пысӑк ҫӗкленӳпе пулса иртнӗ. Сталин тата Микойан йултащсем Армйан СС Республикӗн Верховнӑй Советне депутата суйланма баллотировкӑна тӑма килӗшӳ пани ҫинчен пӗлтернине пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илнӗ.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцӑсен Депутачӗсен Шупашкар Хула Совет президиумӗ йышӑнна ПОСТАНОВЛЕНИ

1938 ҫулти майӑн 10-мӗшӗнче йышӑннӑ постановлени ҫумне хушса, „РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Положенин“ 33-мӗш статйи тӑрӑх тата Пӗтӗм Российӑ Тӗпӗҫтӑвком президиумӗ 1938 ҫулти майӑн 18-мӗшӗнче „РСФСР Верховнӑй Совет суйлав кунӗ тинӗҫсемпе йуханшыв флот судниссемпе пӑрахучӗсем ҫинче пулакан суйлавҫӑсене РСФСР Верховнӑй Совет суйлавне хутшӑнтарасси“ ҫинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцӑсен Депутачӗсен Шупашкар хула совечӗ йышӑнат:

1. „Имени 15 лет Чувашии“ йатлӑ вырӑнти катер ҫинче РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен суйлав участки организацилес.

2. „ЦИК Чувашии“ йатлӑ вырӑнти катер ҫинче суйлавҫӑсем сахал йышлӑ пулнӑ пирки, вӗсене ВУРТ-ӑн Шупашкар пристанӗ ҫумӗнче организациленӗ 17-мӗш суйлав участки ҫумне ҫыпӑҫтарас.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцӑсен Депутачӗсен Шупашкар Хула Совет председателӗ **КАЛИНКИНА.**

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцӑсен Депутачӗсен Шупашкар Хула Совет ҫекретарӗшӗн **ЗОЛОТНИКОВ.**

ВЕНГРИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ДЕКЛАРАЦИЙӖ

Прага, майӑн 15-мӗш. Ӗнер Венгрин ҫӗнӗ премйер-министрӗ Имреди правительствӑн декларацийӗ пирки парламентра тухса каланӑ. Имреди ҫӗнӗ правительствӑн тулти политӗкӗн ыйтӑвӗсем ҫинче чарӑнса тӑрса, Венгри малала та Италипе, Германипе тата Польшӑпа туслӑ ҫыхӑнасене ҫирӗплетме кирлине палӑртнӑ. Шалти политика тӗлӗшӗнчен Имреди уйрӑмӑнах вӑрттӑн пытанса ӗҫлекен организацисемпе татӑклӑн кӗрешме кирли ҫинчен ҫивӗччӗн каланӑ.

Коммуниссем! Партире тăман массăсемпе таччăн çыхăнăр, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсене пĕрле тăратăр!

ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕнче

Майăн 15-мĕшĕнче Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси мĕнле пыни çинчен Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕн тата çав районри Пайпашкинă, Тутаркас райĕçтăвкомĕн тата çав районри Чемей йалсовечĕн доклачĕсене итлерĕ.

Суйлав кампанийĕ пуçланни чылай вăхăт иртрĕ пулсан та, Хĕрлĕ Чутай районĕнче суйлава хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пырать. Райĕçтăвком председателĕ Данилăв йулташ хăйĕн докладĕнче суйлава хатĕрленес, суйлав саккунĕсене вĕренес ĕçсем мĕнле пынине тĕплĕн каласа пама пултараймарĕ. Майăн 15-мĕшне çитичченех Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕ, çавнашкалах йалсоветсем Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕ апрелĕн 25-мĕшĕнче йышăннă постановленине сӳтсе-йавман.

Районра суйлав саккунĕсене вĕренес ĕçе пур ĕççыннисене те хутшăнтарман. Стариксемпе ачалă хĕрарăмсене вĕрентме тытăнман. Вĕсемпе уйрăмăн ĕçлени çук. Вулав çурчĕсем районра 25. Анчах вĕсем пĕри те агитаципе пропаганда ĕçне тивĕçлипе туса ныма тытăнман. Вулав çурчĕсем хупă ларaççĕ. Суйлав саккунĕсене вĕрентес тата массăлă ĕçсене тума учителсене çеç хушнă. Çав вăхăтрах йалсенчи политика йенчен ӳсĕнĕ комсомолĕцсене, колхозниксене хутшăнтарман.

Уйрăмах суту-илӳ организацисем начар ĕçлеççĕ-ха. Хĕрлĕ Чутай районĕнче йалпосем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене, плакатсемпе лозунгсене пит сахал кӳрсе килнĕ, хăшпĕр йалпосем çав йапаласене пачах кӳрсе килмен. Çавна пула чылай йалсоветсем суйлав литературисемсĕр ларaççĕ, суйлав саккунĕсене вĕренесси чăрăнса тăрать.

Районра агитацилĕ ĕçе начар туса пынипе хăш-пĕр йалсенче сектантсем пуçĕсене çĕклеме пуçланă.

Суйлавçăсен спискисен формине райĕçтăвком майăн 11-мĕшĕнче тин илсе кайнă. Вĕсене халĕ те йалсоветсене валеççе паман.

Пайпашкинă йалсовечĕ (председателĕ Иванов йулташ) суйлава тĕплĕн хатĕрленет. Йалсоветра суйлав Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе 23 кружок тунă. Вĕсем заньатисене йĕркелĕн иртерсе пыраççĕ. Пурĕ 23 агитатăр. Вĕсем кружоксенче ĕçленипе пĕрлех, заньатисене пыраймаң хĕрарăм-суйлавçăсен килĕсене кайса, Положенисене вĕрентеççĕ. Икĕ колхозри пухусенче икшер хут суйлав Положенисем çинчен вĕреннĕ. Агитатăрсенчен Тирейкин учителе палăртмала. Вăл кружокра вĕрентнисĕр пуçне, килĕрен çӳресе Положенисем çинчен ăнлантарса парать. Çавнашкалах агитатăрсен семинарне иртерет.

Йалсовет суйлавçăсен списăкне туса çитерет. Списăксене курăнмали вырăна çакма рамăсем туса хатĕрленĕ. Учителсем хутла пĕлменнисене тăрăшсах хутла вĕрентеççĕ.

Тутаркас райĕçтăвкомĕ те районра ĕçсем мĕнле пынине пачах пĕлмест. Вырăнсенче йатшăн кружоксем организациленĕ, вĕсен руководителĕсене—агитатăрсене те уйăрса хунă, анчах кружоксем нумайĕш ĕçлеме тытăнман, руководителсем хăйсен кружокĕсен составне пĕлмеççĕ. Агитатăрсемпе калаçу иртерекенсен литературă çук.

Районра суйлав Положенисене вĕрентес ĕçе 13 пин суйлавçăна хутшăнтарнă. 11 пин суйлавçă ниçта та вĕренмест. Çак хисепе хĕрарăмсемпе стариксем кĕреççĕ. ЧАССР тата РСФСР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене—чăвашла кăларнисене района майăн 9-мĕшĕнче çеç кӳрсе килнĕ, анчах вĕсем çителĕксĕр.

Тутаркас районĕнче çакнашкал йăла пур. Суйлавçăсене кружокран вĕрентсе кăлараççĕ те, вăра вĕсемпе урăх куллен ĕçлесе пымаççĕ.

Районра пурĕ 180 радиоприйомник, вĕсенчен 46-шĕ ĕçлемеççĕ.

Тутаркас районĕнче те Хĕрлĕ Чутай районĕнчи пекех суйлавçăсен списăкĕсене икшер екземпльар çеç тăваççĕ. Суйлав Положенисене пăсмала мар, суйлавçăсен списăкĕсене 3-шер екземпльар тумала. Тутаркас районĕнче суйлавçăсен списăкĕсене тунă чухне, суйлав прависĕр хăварнă çынсене списăка кĕртнĕ тĕслĕхсем те пулнă.

Физкультурниксем суйлав кампанине хутшăнчĕç

„Спартак“ физкультура обшчĕствин Чăваш совечĕ тата ку обшчĕствăна кĕрекен вырăнсенчи коллективсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанине хĕрӳлĕн хутшăнчĕç. Суйлав кампани вăхăтĕнчи физкультурăла-массăлă ĕçсем план тăрăх пулса пыраççĕ. „Спартак“ обшчĕствин вырăнти коллективĕсенче докладсемпе лекцисем иртереççĕ, суйлав Положенийĕсемпе Конституцисене вĕренеççĕ. Ийунĕн 26-мĕшĕнчен велочупу, кимĕпе ишмели поход, шыв çинче ишмели праçник, тĕрлĕрен массăлă естафетăсем тата ытти ĕçсене те тума палăртнă.

„Спартак“ обшчĕствин Чăваш совечĕ суйлав кампанине хутшăнса ĕçлес ыйтупа физкультура инструктăрĕсен канашлăвне туса иртерчĕ.

Йĕпреçри „Кооплеспром“ ертел çумĕнчи хĕрлĕ [illegible]авла „Спартак“ обшчĕстви ийунĕн 26-мĕшне шыв станцине уçать. Чăваш совечĕ шыв станцине вальди икĕ шлюпка илсе пачĕ.

Г. Иванов.

Участкăри суйлав комиççисен составне çирĕплетнĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Райĕçтăвком президиумĕ йышăннă тăрăх, районра 56 суйлав участки организациленĕ. Вăл шутран Сĕнтĕрвăрри хулинче 5 суйлав участки тунă.

Суйлавçăсем участкăсенчи суйлав комиççисенче ĕçлеме колхозсенчи тата предприйатисенчи чи лайăх çынсене уйăрчĕç. Карапаш участкин суйлав комиççи председателĕн заместительне Йакăв Петрович Йенцов йулташа уйăрнă. Вăл паллă агитатăр. Йенцов йулташ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисемпе Сталинла Конституцине вĕрентес тĕлĕшпе 7 заньати туса иртерни. Вăл Карапашри комсомол комитечĕн çекретарĕ тата вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

МТ Станцинчи трактăристкă Анна Иванăвна Камбулăвă йулташа Нерйадăвă суйлав участкин комиççи членне çирĕплетнĕ. Вăл комсомолка. Производствăра кăтартулă ĕçлесе пырать, сменăра трактăрпа сухалас плана 213-шер процент тултарса пырать.

Алексей Çергейевич Староверăв йулташа Сĕнтĕрвăрри хули суйлав участкин комиççи членне суйланă. Вăл судоверфри комсомол комитечĕн çекретарĕ. Староверăв йулташ производствăра нормировшчик пулса ĕçлет, ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

* * *

Майăн 16-мĕшĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи йалсовет çекретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Кунта суйлавçăсен списăкĕсене тĕрĕс тăвас ыйтăва сӳтсе-йаврĕç.

П. Сатур.

Туçара чăрмантараççĕ

ПАТĂРЬЕЛ. (Телефон тăрăх). Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ йышăннă тăрăх, Туçа йалĕнче ЧАССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççи вырнаçать. Паллах, Туçа йалĕнче ĕçлекенсем округ суйлав комиççине ĕçлеме пур майсемпе те пулăшмала пулнă. Анчах Туçа йалсовечĕн çекретарĕ Мульуков йулташпа вăтам шкул директăрĕ Савелйĕв йулташ çак ĕçе хăйсем майлă ăнланнă. Вĕсен суйлав комиççине вырнаçма çурт вăхăтра тупса парас вырăнне; комиççи членĕсенчен тăрăхласа, округри суйлав комиççине колхоз картишĕнчи пĕчĕк чӳречелĕ çурта вырнаçтарма хăтланнă. Комиççи членĕсем кунпа килĕшмен. Йалсовет çекретарĕ Мульуков йулташ каллех пыльчăк айне пулнă, çын пурăнман тăвăр çурта вырнаçтарма тăрăшнă.

Ытла та тĕлĕнмеле, йалсовет çекретарĕ Мульуков округри суйлав комиççи председательне Петровă йулташа:

— Суйлав комиççине мĕн кирлине сирĕн хусамăран, комиççи укçипе тупмала, тепĕ те вăтанман.

— Есĕ халăх шапăсĕне мĕншĕн выльатăн? —тесен:

— Халăх шапăсĕ маншăн пимĕн тĕшне те тăмасть, тесе ответленĕ Мульуков.

Çак ĕçре вăтам шкул директăрĕ Савелйĕв йулташ та айăпсăр мар. Вăл округ суйлав комиççине шкул çуртне вырнаçтарасшăн пулман.

Халĕ комиççи шкул çуртĕнче вырнаçнă пулсан та, унта йĕркелеме сĕтелпукансем памасăр тăраççĕ. Çитменнине суйлав комиççи вырнаçнă пӳлĕме малтан пулнă çăраççине те питĕрме памаççĕ. Çавнашкалах районри çыхăну уйрăмĕ округ комиççине телефон та кӳртсе паман.

Н. ПУШКИН.

„Волна революции“ колхозра (Краснодарски край, Ваçуринскайа станици).

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Лаша фермин пуçлăхĕ И. И. Часник колхозниксене „ССРС Верховнăй Совечĕн Ведăмăçĕсемпе“ паллаштарать.

Л. Кадимăв фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Ăмăрту сарăлсах пырать

Çĕмĕрлери „Большевик“ савăтри агитатăрсем цехсемпе бригадăсенче ĕçлекен рабочисемпе работницăсене, инженерла-техникла работниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав Положенисемпе Конституцисем çинчен вĕрентеççĕ. Агитаципе массăлă ĕç нихăçанхинчен вăйлăн пулса пырать.

Халĕ савăтра РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренес тĕлĕшпе 29 агитатăр ĕçлет. Вĕсем хушшинче 8 комсомолĕц тата партире тăманнисем 4 çын. Вĕсем, производствăри стаханăвĕцсем, агитаци ĕçĕнче те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Агитатăрсем рабочисемпе служăшчисемпе таччăн çыхăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем час-часах хватерсенче пулаççĕ.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисемпе Конституцисене вĕренмели 20 кружокра 700 суйлавçă вĕренеççĕ. Заньатисем 5 кунта пĕрре, йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Рабочисем ыйтнипе кура хăшпĕр кружоксен заньатисене рабочисен хватерĕсенче иртерме тытăнна.

Кружоксенче вĕреннисĕр пуçне йулашки вăхăтра тĕрлĕ ыйтусем тăрăх калаçусемпе лекцисем нумай иртернĕ. Суйлавçăсем ушканăн пухăнса киносем тата спектакльсем курма çӳреççĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне—ийунĕн 26-мĕшне çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесси шĕн бригадăсем тата цехсем пĕрпĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Савăт коллективĕ 1938 çулхи 4 уйăх хушшинче пысăк ӳсĕмсем турĕ. Чĕр тавара 4,5 процент перекетлесе хăварнă, производствăлă плана 7,2 процент ытларах тултарнă тата туса кăларакан таварăн пахлăхне чылай лайăхлатнă.

„Большевик“ савăтри рабочисем халăх тăшманĕсен сăтарла ĕçсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерсе производствăлă плана ытлашшипех тултарма сăмах параççĕ.

Иваницкий.

Парти организацийĕсен районсенчи пухăвĕсем

Пуху кайа йулса уçăлчĕ

ИÇЛЕЙ, майăн 16-мĕш, (телефонпа). Майăн 16-мĕшĕнче, пĕр сехет тĕлĕнче ПСК(б) Партин районри пухăвĕ уçăлчĕ. Пухăва 12 сехетре пухăнса çитмеле пулнă, анчах партин пуçламĕш организацисенчен 52 член, 30 кандидат вырăнне 41 член, 19 кандидат çеç пухăннă пирки, пуху кайарах йулса уçăлчĕ. Пухура, отпускра та командировкăра пулнипе, 6 член, 2 кандидат пулайман, ыттисем нимĕнле сăлтавсăрах пыман.

Пуху çакнашкал кун йĕрки çирĕплетрĕ. Пĕрремĕш—ПСК(б) Парти Обкомĕн, 2-мĕш ПСК(б) Парти райкомĕн тата ревизи комиççин отчочĕсем; йулашки ыйтусем—ПСК(б) Парти райкомĕн членĕсене, ревизи комиççин членĕсене тата облаçри конференцине делегатсем суйлассипе.

Пĕрремĕш ыйтупа ПСК(б) Парти Обкомĕн отчотне тума ПСК(б) Парти Обкомĕн йалхуçалăх пайĕн заведуйушчийĕ М. Кольцов йулташ сăмах илчĕ.

Л. Павлăв.

Шупашкар районĕ

КӲКЕÇ. Майăн 15-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи парторганизацин пухăвĕ уçăлчĕ. Пухăва организацири 88 коммунисран 64-шĕ пынă. 14 коммунис ним сăлтавсăрах пыман.

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн ĕçĕсем çинчен ПСК(б)П Обкомĕн парти пропагандипе агитаци пайĕн пуçлăхĕ Çергейĕв йулташ отчот турĕ.

Майăн 15 — 16-мĕшĕсенче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн отчочĕ тăрăх прени пычĕ. Пуху активлă пырать.

Перлов.

Йетĕрне районĕ

ЙЕТĔРНЕ, майăн 17-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Ĕнер майăн 16-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен икĕ сехетре, коммунисссен районри отчотпа суйлав пухăвĕ уçăлчĕ. Пухăва 191 коммунисран 150 коммунис çеç пухăнчĕç. 15 коммунис ним сăлтавсăрах пухăва пыман.

Пуху малтанхи ларура ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн тата Йетĕрне райкомĕн отчочĕсене итлерĕ.

Паян ирхине ревкомиççи отчочĕ пулать тата докладсем тăрăх прени пуçланать.

Мельникăв.

Йĕпреç районĕ

ЙĔПРЕÇ (телефонпа, хамăр корр.). Майăн 16-мĕшĕнче районри парторганизацин отчотпа суйлав пухăвĕ уçăлчĕ. Пухăва организацири 133 коммунисран 115 коммунис пынă.

Пухура ПСК(б)П Обком отчотне ПСК(б)П Обком çекретарĕ Дубăв йулташ турĕ.

Ф. Захарăв.

Игăрь полки çинчен çырнă сăмах

(Йулашки. Пуçламăшĕ ĕнерхи номĕрте)

Аçа-çисĕм пек
Лӳчĕркенĕ вăл ирсĕрсене:
Хăватлă полкĕсемпе,
Хурçă хĕççемпе
Кĕрсе кайнă вăл
Половец çĕрĕ çине;
Вăл таптанă унта
Сăртсене, варсене,
Кӳлĕсемпе çырмасене
Пăтратнă,
Йухан-шывсене, шурсене
Типĕтнĕ...
Ирсĕр Кобйака
Хăйĕн Лукоморийинчен,
Аслă та çирĕп
Половец полкĕсенчен,
Çавра çил пек, уйăрнă.
Йуçне хунă Кобйак
Кийĕв хулинче,
Çвйатослав керменĕнче.

Унта нимĕççемпе
Венецейцăсем те,
Унта моравцăсем те,
Грексем те
Çвйатослава мухтаса йурлаççĕ,
Шеллесе питлеççĕ
Игăрь кньаçе.
Вырăс ылттăнне тийесе
Половецăн
Кайал шывĕ тĕпне
Пурлăха путарнăшăн.

Çавăнтах Игăрь кньаç те
Ылттăн йĕнер çинчен
Чура йĕнерĕ çине куçса ларчĕ.

6

Салхуланчĕç хуланăн хӳмисем,
Савăнăç та тамалчĕ хуласенче,
Çвйатослав пăтранчăк тĕлĕк курчĕ
Кийĕв хулинче, сăртсем çинче.

„Çавă çĕрле, каçранах,
Тумлантарчĕç мана
(Çакăн пек калать)
Тис краватĕ çинче,
Хура савăнпа,
Тата ватпа хутăштарнă
Симĕс ерех
Тыттарчĕç;
Ирсĕр тăшман тăлмачĕсем
Ырхан çĕмрен йĕннисенчен
Шултра мерчен сапса пачĕç,
Манăн аркăм çине,
Тем тĕрлĕ ыр турĕç
Вĕсем мана.

Акă ĕнтĕ ылттăн тăрăлă çуртăмра
Урайсем пĕр кньаççĕр;
Акă ĕнтĕ мĕн каçран
Çĕрĕпелех:
Лере, шурлăхра,
Айлăмра, шыв хĕрринче
Сут-хăмăр çăхансем
Кранклатрĕç,
Тарăн шырланран вĕсем
Кăвак тинĕс йенне
Куçайрĕç“.

Çапла каларĕç кньаçе
Бойарсем:
„Çапла, кньаçăм,
Ас-тăна хуйха
Пăталарĕ:
Ку вăл
Аншĕн ылттăн кĕрекинчен —
Тмуторакань хулинчен
Икĕ сокăл
Вĕççе кайрĕç
Тивлетнĕ шырама,
Йе шеломпалан
Дона ĕççе йама.

Çапла сокăл çуначĕсем
Ирсĕр тăшман хĕççĕсем пек
Çĕр çине васкарĕç,
Тата вĕсене хăйсене те
Тимĕр тăлăсемпе тимĕрлерĕç.

Тĕттĕм пулчĕ вăл кун:
Ик хĕвĕл сӳнсе ларчĕç,
Йăм-хĕрлĕ вут йупасем
Иккĕш те сӳнчĕç,
Вĕсемпе пĕрлех сӳнчĕç икĕ çамрăк уйăх та;
Аслашшĕ — Олег,
Ашшĕ — Çвйатослав
Сĕмпеле хупăрланчĕç...

Çапла Кайал шывĕ çинче
Çутта тĕттĕм хупăрларĕ,
Вырăс çĕрĕ тăрăх,
Пардус[19] кĕтĕвĕ йевĕр,
Половецсем вырнаçрĕç,
Тинĕс пекех килсе капланчĕç,
Вара вăл ирсĕрсен чăрсăрлăхĕ
Татах ӳссе кайрĕ.

Ĕнтĕ чап вырăнне чыссăрлăх килчĕ,
Ĕнтĕ ирĕк çине ирĕксĕрлĕх утланчĕ,
Ĕнтĕ çĕр çине Див килсе çитрĕ,
Ĕнтĕ готсен пике-хĕрĕсем
Кăвак тинĕс хĕрринче
Йурласа йачĕç,
Вырăс ылттăнĕпе йанратса;
Авалхи вăхăта ырлаççĕ,
Шарукан тавăруне мухтаççĕ
Вĕсем.[20]
А епĕр, дружинă,
Савăк кун çуккишĕн
Тунсăхларăмăр“.
Вара аслă Çвйатослав
Куççульпеле хутăш
Ылттăн сăмах кăларчĕ те
Çапла каларĕ:

„О, манăн ывăлăмсем —
Игăрпа Вçеволод!
Ир пуçларăр есир
Половец çĕрне
Хĕççемпе йĕкĕлтеме,
Хăвăра вальди мухтав шырама!
Чин тăрăх мар вĕсене аптратрăр,
Вĕсен ирсĕр йунне те
Саккун тăрăх мар
Йухтартăр![21]

Ан тив, сирĕн харсăр чĕрĕрсем
Çирĕп хурçăпа кăшăлланнă,
Паттăрлăхпа пиçнĕ пулччăр,
Анчах мĕскер турăр-ха есир
Ман кĕмĕл пек кăвак
Пуçăма?
Ак курмастăп еп халь
Хамăн вăйлă та пуйан
Тăванăм Йарославăн хăватне
Хăйĕн темчул çарĕсемпеле:
Чернигăв бойарĕсемпе,
Йатлă çынсемпе те горцăсемпе,
Селевĕсемпе, сĕтĕрнчĕксемпе,
Тата карма-çăварсемпе
Хăйсен утаманĕсемпе пĕрле:

Вĕсем пулсан шчитсемсĕрех,
Атă кунчинчи çĕçĕсемпех,
Асаттесен мухтавĕне
Йанăраса кăшкăрашса,
Полксене çĕнтеретчĕç.

А есĕр каларăр:
Вăй илĕпĕр хамăрах!
Килес чапа-мухтава
Вăрлăпăр хамăрах,
А иртнĕ чапа-мухтава
Пайлăпăр пĕр хамăрах!

Мĕнех-ха, тăвансем,
Питех тĕлĕнмеле-им вара?
Çук-им ватта йашăланма?
Сокăл тĕс пăрахать пулсан,
Пур кайăка çӳлех хӳтĕртет вăл,
Хăй йăвинчен мăшкăлама
Памасть вăл никама.
Анчах инкек:
Кньаççем мана пулăшмаççĕ...

* * *

Çулсем телейсĕр килсе тухрĕç:
Рим çарĕсем ак —
Половец сабльисем айĕнче
Йанăшаççĕ,
А Володимĕр
Шăлт пĕтрĕ суранланса...
Хуйхă-суйхă-çке
Глебăн ывăлне!

Ей, аслă кньаç
Вçеволод!
Шутламастăн-и ес
Инçетрен вĕççе килме —
Аçун ылттăн престолне
Сыхлама?..
Пултаратăн-çке ес Атăла
Сирпĕтсе пĕтерме кĕсменпе,
Дона шеломсемпе
Ăсса тиеăтме!
Ес кунта пулнă пулсан,
Сирĕм сума хĕрарăм чура,
Алă сума
Ар-чура
Пулнă пулĕччĕ.[22]

Тип çĕртен те пултаран-çке ес
Чĕрĕ çĕмренсемпеле,
Хăйсемех перекенскерсемпе,
Глебăн тĕветкел ывăлĕсем пек
Пеме.[23]

Ес, буй-Рӳрик,
Ес те, Давид![24]
Сирĕн мар-и ылттăн шеломăрсем —
Ишнĕ йун ăшĕнче?
Сирĕн мар-и харсăр дружинăрсем
Пĕлмен уй-хирсенче
Хурçă сабльăсемпе суранланнă
Турсем йевĕр ĕкĕреç?

Сиксе ларăр, кньаççем,
Ылттăн йĕнерĕсем çине:
Хамăр вăхăтăн тарăхĕшĕн,
Вырăс çĕрĕшĕн,
Харсăр Игăрĕн,
Игăрь Çвйатославич суранĕсемшĕн!
Галицкри Осмомысл Йарослав!
Ес пит çӳлте ларан
Хăвăн ылттăн престолу
Хушшинче,
Тимĕр тумтирлĕ
Полкусемпеле
Ĕмпӳ çулне картласа,
Дунай хапхине хупса,
Тем пек пысăк çарсене
Пĕлĕтсем урлă куçарса,
Карапсене Дунай çине çитерсе,
Угор тăвĕсене тĕкĕлерĕн ес.[25]

Çĕрсем тăрăх шăваç
Сан аçа-çисĕмӳсем:
Кийĕв хапхине уçан та
Аçун ылттăн сĕтелĕ хушшинчен
Çĕрсем урлă султансене
Перетĕн...

Пер Кончака, господинăм,
Пер ирсĕр кошчейа —
Вырăс çĕршĕн,
Харсăр Игăрьшĕн,
Игăр Çвйатославич суранĕсемшĕн!
Есĕ, буй—Роман,
Есĕ те, Мстçислав![26]
Сирĕн харсăр шухăшăр
Хавхалать ăс-тăна ырă ĕç тума,
Хăвăр харсăрлăхăрпа
Çӳлтен вĕçетĕр есĕр çапăçусенче,
Сокăл йевĕрлĕн:
Çилпеле сарăлса,
Çавă кайăкран та шухă
Пулма тăрăшса!

Ма тесессĕн, сирĕн кăшнийĕн
Латын шеломĕсем пуçăрта,
Тимĕр панцырсем
Çийĕрте:
Çĕр суралчĕ вĕсенчен,
Тата темчул ирсĕр патшалăхсем
Арканчĕç:
Литва,
Йатвйаш,
Деремел,
Половецсем —
Сăннисене ӳкерчĕç хăйсенне,
Унтан тайма пуçĕсене
Хучĕç çав хурçă хĕççем айне...“

— „Анчах сӳнчĕ, кньаçăм,
Сӳнчĕ Игăрщĕн
Сар хĕвел çути,
Йавăç хăйĕн çӳлçине
Ыр кăмăлпах ӳкермерĕ-çке:
Роси-шывĕ тăрăх,
Сула-шывĕ тăрăх,
Хуласене илчĕç пайласа,
Игăрь харсăр полкине
Вилĕмрен чĕртме çук!
Дон сире чĕнет, кньаççем,
Çĕнтерӳ тума чĕнет:
Пĕртен-пĕрех Ольговичсем,
Харсăр кньаçăмсем,
Елкерчĕç çапăçăва...“

„Ингварпа
Вçеволод
Есир те виççĕр,
Мстиславичсем,
Тухнă чаплă йăваран
Улт çунатлă кайăксем.[27]
Çапăçура мар-çке хуласем пайларĕр есĕр,
Апла пулсан, мĕне кирлĕ

Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Пирĕн республикă уйĕнче кăçалхи çулта Канаш—Шупашкар чукунçулне туса пĕтерсе август уйăхĕнче експлоатацине парас задач тăрать. Çак ĕç валљи ССР Сойузĕн правительстви кăçал 10 мĕлйун тенкĕ ытла укçа панă (иртнĕ çулта 9 мĕлйун тенкĕ пулнă).

Иртнĕ 1937 çулта çĕр ĕçĕсене кăна тата кĕперсемпе тампăсем тунă трубасем кăна хывнă, вĕсене те пĕтĕмпех туса ситереймен.

Кăçал чи кирлĕ ĕçсене туса пĕтермеле: пĕтĕмпе 82,44 километр тăршшĕ (станцисенчи çулсемпе пĕрле) çулсем хывассине туса ситермеле; çулăн пĕтĕм тăршшĕнче хăйăр сарса çирĕплетсе тухмала; сыхăну ĕçне тумала; пассажирсене валљи тата техникăла çурт-йĕрсене, служăбă тата пурăнмали çуртсене туса лартмала; шыв тата енерги хуçалăхне организациллемеле; складсем валљи çуртсем туса лартмала, çул çинче хăйĕнче те, çавăн пекех кĕперсемпе трубасем патĕнче, нумай çĕр ĕçĕсене туса пĕтермеле.

Çак ĕçсене пурнăçа кĕртме строительствăра майăн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшне ситиччен йалан ĕçлекен рабочисем 3200 çын, 300 лаша, 12 автомашинă, 3 екскаватăр тата 100 ытла инженерла-техникла работниксем кирлĕ.

Чукунçул строительствине августăн 1-мĕш тĕлне обйазательнă туса пĕтермеле.

Çак строительствăшăн вăраха йани республикă столицинчи çĕнĕ савăтсен строительствисене чăрмантарать.

Халĕ лини хывас тĕлĕшпе кăна ĕçсем пыраççĕ, лини хывмали тата 23 километр йулнă. Кăçал тума палăртнă тĕп ĕçсене пурне те йулнă икĕ уйăх çурă хушшинче туса пĕтермеле. Çавăнпа та чукунçул строительствинчи ĕçсене питех те çине тăрса, тимлĕн, пысăк организацилĕхпе туса пымала, çак ĕçре республикри, районсенчи тата йалсенчи организацисен тата республикри ĕçсынни массисен пурин те пулăшса пыни кирлĕ.

Çакна шута илсе, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1. Канаш—Шупашкар чукунçул строительствин руководительсене — Вавилкин тата Черный йулташсене, прораб участкисен начальникĕсене — Розанăв, Антронăв, Голубĕв, движени начальникне —Родионăв йулташсене кашнинех майăн 20-мĕш тĕлне хăйсен ĕçĕ тăрăх строительствăна туса пĕтерме тата чукунçула 1938 çулти августăн 1-мĕш тĕлне хута йама май паракан ĕçсене организацилесен планне тĕплĕн шухăшласа туса хатĕрлеме хушас.

2. Строительствăра ĕç вăйĕ тата инженерла-техникла кадрсем иккĕмĕш черетлĕ ĕçсене саланса пĕтмеле мар тата вĕсем тататкăлă ĕçсенче ĕçлемеле йĕрке тумала.

Айалта кăтартнă ĕçсем чи малтан тума кирлисем тата тататкăлă ĕçсем пулассĕ тесе шутласа, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ строительствă руководительсене çакна тума хушать:

а) чукунçул линине хывассине (23 километр) обйазательнă икĕ сменăпа ĕçлемеле туса ийунĕн 1-мĕшĕнчен нийепле те кайа йулмасăр пĕтермеле;

б) тĕп çул çинчи тата кĕнерсемпе тампăсем патĕнчи туса пĕтермен çĕр ĕçĕсене туса пĕтермеле, 1938 çулхи ийунĕн 20-мĕш тĕлне шпалсем çине хăйăр сапса çирĕплетсе лартмала;

в) тĕп çул çине халех хăйăр сарма тата унпа пĕрле тумали ĕçсене тума тытăнмала (пăсăлнă вырăнсене йусасси, рихтовкă тата ыт. те). Хăйăрăн пĕрремĕш сийне ийулĕн 15-мĕш тĕлне пĕтĕм çул тăршшĕпе станцисенчи çулсем çинче ийулĕн 20-мĕш тĕлне сарса ситермеле. Тĕп çул çинче хăйăра пĕтĕмпех сарса тухассине Канаш—Çĕрпӳ участкинче августăн 1-мĕш тĕлне, çулăн йулашки тăршшĕнче (Çĕрпӳ—Шупашкар) 1938 çулхи сентабĕр уйăхĕн варринче туса пĕтермеле;

г) шыв тăратмала тăвас ĕçпе сыхăнса тăракан строительствă тата монтаж ĕçĕсене халех тума тытăнмала, ийулĕн 1-мĕш тĕлне Çĕрпӳре, августăн 1-мĕш тĕлне Шупашкарта сооруженисем пурте хатĕр пулмала;

д) Тракра, Çĕрпӳре тата Ишлейре пассажирсене кирлĕ çуртйĕрсене тата служăбă çуртйĕрсен строительствине, çавăн пекех тата линипе йĕркелĕн усă курма кирлĕ ытти çуртсене тума майăн 20-мĕшĕнчен кайа йулмасăр тытăнмала, ку ĕçсене обйазательнă августăн 1-мĕшне пĕтермелех. Ку ĕçсен хисепне оборудованисен монтаж тăвасси те кĕрет.

Шупашкарти вакзал строительствине майăн 20-мĕшĕнчен пуçламала, сентабĕрĕн 1-мĕш тĕлне, кирлĕ оборудованисене монтаж тăвассине те кĕртсе, туса пĕтермеле.

Вакзала тăвассине Чăвашстройтрест çине хурас, Вавилкин тата Ворначов йулташсене халех тивĕçлĕ договăр тума хушас:

е) сыхăну тĕлĕшпе праулуксем карассине, диспетчĕр аппарачĕсене тата йупасем лартассине ийулĕн 25-мĕш тĕлне обйазательнă туса пĕтермеле;

ж) çирĕплетӳ ĕçĕсене пурне те (çерем сарасси, чукунçул айăккисене хытарасси) обйазательнă май тата ийуљ уйăхĕсем хушшинче туса иртермеле, вĕсене ийулĕн 1-мĕш тĕлне пĕтĕмĕшпех туса пĕтермеле;

з) Шупашкарта електростанци çуртне (ку ĕçе 2 локомобил лартасси тата електросеть монтажĕ те кĕрет) сентабĕрĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтермеле.

Ана тума кирлĕ 2 локомобиле тата електрооборудованисене ийулĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр кӳрсе килмеле;

и) лини çинче чукунçул служăшчисем валљи пурăнмали 15 çурт тăвассине, вĕсене чукунçула хута йанă вăхăт тĕлне, урăхла каласан, 1938 çулти августăн 1-мĕш тĕлне, туса пĕтермеле йĕркелесе туса пымала.

3. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ лини çинче хăйăр сарса тухассине кĕтсе, материалсем тийенĕ пойассене иртсе çӳреме харушă тайлăм вырăнсенче пăсăлнă вырăнсене йусас тĕлĕшпе нимĕнле мерă та йышăнманнине пачах тӳсме çук тесе шутлать.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ строительствă руководительсене çулйĕрсем çинче хăйăр сарса тухиччен материалсем тийенĕ пойассем пĕтĕмĕшпех йĕркелĕн çӳремеле туса çирĕппĕн тĕрĕслесе пырассине йĕркелеме хушать.

4. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Снабжени Тĕп Управленийĕ халиччен те Канаш—Шупашкар чукунçул строительствине строй-материалсем паманнине, пĕренесем (1300 кубла метр), çурмали йăвăç (2120 кубла метр), кирпĕч (900 пин штук) илме фонт-нариад паманнине пачах йĕркесĕр йапала тесе шутлать.

СССР Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн— Л. М. Кагановичран йулташран Снабжени Тĕп Управленине строиматериалсем тата оборудованисен кирлĕ фончĕсене халех уйăрса пама хушма тата панă нарйадсем тăрăх фондсене кĕске вăхăтрах ĕçе йанине тĕрĕслесе пыма хушма ыйтас.

Строительствă начальникне—Вавилкин йулташа тата Россиабсбыт управляющине — Степнов йулташа — 6600 кубла метр чул тăратас тĕлĕшпе договăр тума хушас.

Шоссе çулĕсен пайĕн начальникне—Анчиков йулташа—вакзал çуртĕн викĕсне тума (Шупашкарта) Канашпа Хусан хушшинчи тракт çинчен 1000 кубла метр чул кĕтерме пама хушас.

Государствă план комиссине республикă фондĕнчен 200 пин штук черепица уйăрса пама хушас.

5. Чукунçул строительствин управленине колхозниксемпе висĕ уйăхран кайă мар срукпа ĕçлемеле договăрсем тума, çак вăйпе колхозсене организациллĕн пухассине халех çак районсене сарса йама хушас:

Шупашкар районĕнче 150 çуран çын, 20 лашапа тата Шупашкар станцинче çĕр ĕçĕсене тума пĕр уйăхлăха 170 лав тата 340 çуран рабочи уйăрса памала;

РАЙОНСЕМ	Çуран çынсем	Лашалисем
Ишлей районĕнче	200	25
Çĕрпӳ районĕнче	220	30
Трак районĕнче	200	25
Шăхасан районĕнче	150	20
Канаш районĕнче	100	
Патăрйел районĕнче	250	30
Шăнкăртам районĕнче	250	30
Кĕçĕн Нелĕк районĕнче	250	30
Елĕк районĕнче	200	25
Куславкка районĕнче	200	25
Сĕнтĕрвăрри р-че	200	25
Вăрнар районĕнче	200	25

Çулте асăннă районсенчи райĕçтăвкомсен председателĕсене, хăйсен çине ответлăх илсе, майăн 20-мĕш тĕлне колхозсем айакра ĕçлес йĕркепе чукунçул строительствин вăйпе организацилле уйăрса пама пурнăçа кĕртме хушас. Ĕç вăйĕ пухасси колхозсене айăпласан, райĕçтăвкомсен председателĕсен районри активран тĕрĕслекене йулташсене вербовщиксем пулса ĕçлеме уйăрмала.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительствин начальникĕ Вавилкин йулташ райĕçтăвкомпа уйăрнă вербовщиксемпе ĕç укçи ĕçе илнĕ тата ĕçре çирĕплетнĕ кашни рабочи пусне 4-шар тенкĕ тӳлеме пулăш çинчен пĕлтернине асра тытас.

Строительствă начальникĕ Вавилкин йулташ уйрăм ĕçсене тума (клеткăсем çине хăйăр сарасси, çерем сарасси, хытарасси, çул çинчи çуртсене тăвасси т. ыт. те) уйрăм колхозсене памала тунине ырлас, строительствă Управленийĕ йенчен çак ĕçе обйазательнă йĕркепе контроль туса тăмала.

Райĕçтăвкомсене çак ĕçре строительствă Управленине кирлĕ пек практикăлă пулăшу парса пыма хушас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне—Матвеĕвă йулташа—чукунçул строительствине ĕç вăйĕ парасси çине кирлĕ пек пăхма тата контроль туса пыма хушас.

6. Суту-илӳ Халăх Комиссарне — Вăстрӳк йулташа—чукунçул çинчи рабочи-строительсем пухăнакан пур вырăнсенче те ларйоксемпе столовăйсем организациллеме тата çимĕçсемпе, промтоварсемпе татти-сыпписĕр суту-илӳ тăвассине пурнăçа кĕртме хушас. Йалан ĕçлекен ларйоксемпе пĕрлех, лини тăрăх турттарса çӳрекен суту-илӳ тăвассине организациллемеле, ку ĕçе сывăхри йалпоселсене хутшăнтармала.

Строительствă начальникне Вавилкин йулташа ларйоксемпе столовăйсене кирлĕ çуртйĕрсем тупса пама хушас.

7. Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссариатне майăн 25-мĕш тĕлне чукунçул строительствинчи çак вырăнсенче медицина пункчĕсем организациллеме хушас:

а) Çĕрпӳ станцинче (Михайловка), унта врач, фельдшер тата сестра тухса çӳрекен фельдшер пулмала;

б) Шупашкар станцинче, унта врач тата пĕр тухса çӳрекен фельдшер пулмала.

Канаш, Шăхасан, Трак, Çĕрпӳ, Ишлей тата Шупашкар районĕсенчи пульницăсен заведуйушчисене рабочи-строительсене тивĕçлĕ медицинăлă пулăшу парса пыма хушас.

8. Искусствă ĕçĕсен Управленийĕн начальникне тата кинотресте чукунçул çинчи рабочи-строительсене спектакльсем, кинокартинăсем, концертсем т. ыт. те кăтартассине организациллеме хушас. Çак ĕçсем планне Халăх Комиссарĕсен Совечне çирĕплетме тăратмала.

9. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Центртан чукунçул строительстви-рабочисен Сойузĕн Тĕп Комитетне Канаш—Шупашкар чукунçулĕн рабочи-строительсем хушшинче культурлă-массăлă ĕçе организацилесе пыма айакра тăни пачах йĕркесĕр йапала тесе шутлать.

Профессилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн секретарĕнчен—Шверник йулташран Сойуз Тĕп Комитетне тивĕçлĕ кăтарту пама ыйтас.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канаш—Шупашкар чукунçул строительствине пур рабочи-строительсене, инженерсене, техниксене строительствă ĕçĕсене большевикла сарса йама тата ударникла, стахановла ĕçлесе строительствăна ССР Сойузĕн Правительстви палăртнă срукра туса пĕтерессине пурнăçа кĕртме чĕнет.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ строительствă руководительсене — Вавилкинпа Черный йулташсене хушса строительствăри партикомпа профкома рабочи-строительсене кашнинех квалификаци парас тата вĕсенчен чукунçул çинче ĕçлеме кирлĕ кадрсене вĕрентсе квалификаци памала тăвас, чукунçул служăбине йулас мар текен рабочисене ытти стройкăсене кайма квалификацилĕ çынсем тăвас йĕркепе рабочи-строительсем хушшинче техникăла вĕренӳве массăлăн сарса йарас ĕçсем çине пăхма хушать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ **Л. Спасăв.**

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ **Н. Жукăв.**

Ăмăртура малти вырăна тухассишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. Районри чылай колхозсем çуртыррисемпе пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерчĕç. Ытти колхозсем çуракине вĕçлесе ситереççĕ. Кăçалхи çураки вăтам шутпа кашни гектартан 100 пăтран кайа мар тĕштыра туса илес, висĕ республикă ăмăртăвĕнче малти рете тухас кĕрешӳпе иртрĕ. Ăмăртăва районри колхозсем тивĕçлипе хутшăнса ĕçлерĕç.

Йанташри „Комбайн" колхоз ака ĕçне пысăк пахалăхпа иртерес ĕçре районра малти вырăна тухрĕ. Ку колхозра 140 гектар çинче таса та суртлă вăрлăхсемпе акса хăварнă. Колхоз ăмăртăвĕнче пĕрремĕш бригада (бригадирĕ Н. Кириллăв) мала тухма пултарчĕ. Ватă колхозниксем уйра çамрăк колхозниксемпе ăмăртса ĕçлерĕç. Й. Червйаков 60 çулта тата И. Љоскин 63 çулта. Вĕсем мĕн çуракине тухнăранпах çейалкăсемпе ĕçлесе куллен 6-шер гектар акса пычĕç. С. Петров, Ф. Попов колхозниксем сухалас нормăна 145 процент тултарса ĕçлерĕç.

Йуманайĕнчи „Коминтерн" колхоз та акана лайăх вĕçлерĕ. 104 гектар тĕштырăсене çейалкăпа акнă. Кунта та стахановĕцсем йышлăн шутланаççĕ. И. Михейĕвпа В. Пристăв колхозниксем плугпа сухалас нормăна 130-шер процент, Ф. Макаравпа П. Романăв йулташсем çейалкăсемпе акас нормăна 140-шер процент таран тултарса пычĕç.

Тукасри „Хĕвелтухăç", Пренешри „Майăн 1-мĕш" Мулкачкассинчи „Çамрăк вăй" тата Хутарти Ленин йачĕпе тăракан колхозсем çуракине тимлĕн ĕçлесе иртерчĕç. Çак колхозсенче уйра колхозниксем ĕçленĕ çĕрте культмассăлă ĕçе лайăх туса пынă.

Бригадăсенче кашни кунах стена хаçачĕсем тухса тăнă. Политвулавçăсемпе агитатăрсем уйрах колхозниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентнĕ.

Й. Мозйаков.

„Пĕрлешӳ" колхозра

ВĂРНАР. Малтикасри „Пĕрлешӳ" колхоз Пĕтĕм Сойузри Йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕç илчĕ. Халĕ колхоз иртнĕ çулта тунă ситĕнӳсемпе лăпланса лармасть. Кăçалхи вăйла тырпулшăн тăрăшса ĕçлет. Çав тĕлĕшпе колхозра бригадăпа бригадă, колхозникпа колхозник хушшинче социалисăмла ăмăртăва анлăн сарса йанă. Кăçал кашни гектартан 130 пăт тĕш тырă туса илес тĕлĕшпе Çĕнйал Нурăсри „Правда" колхозпа ăмăртăва тухнă.

Колхоз çуракине планпа кăтартнă срукра пĕтерчĕ. Çуракинче пĕтĕмпе 53 гектар сĕлĕ, 54 гектар тулă, 20 гектар пăрçа, 30 гектар викă утăлăх, 8 гектар викă вăрлăхлăх, пăри 6 гектар, пĕр çул ӳсекен курăксене 40 гектар акса хăварчĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех йаровизацилесе акнă. Вăрлăхсене йаровизацилес тĕлĕшпе Матвейăвă, Константинăвă колхозницăсем тăрăшса ĕçлерĕç. Ака ĕçĕнче Матвейĕв, Данилăв, Давыдăв колхозниксем кашни куллен 2,04 гектаршар сухаласа пычĕç. Алексейĕв, Моисейĕв колхозниксем çейалкăпа кашни куллен 11-шер гектар акса, кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пычĕç. Халĕ маларах акнă тырăсем шăтса тухрĕç. Колхоз кĕр калчисене 34 гектар çине аммиак çелитăрĕпе апат парса тухрĕ.

Н. Козлов.

Колхозсем кантăр акаççĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Районри колхозсем халь кантăр акас, çĕрулми лартас ĕçсене пурнăçласа пыраççĕ. Майăн 15-мĕшне кантăр акас плана район 53 процент тултарнă. 20 колхозра кантăр акса пĕтернĕ, 22 колхозра кантăр акма халĕ те пуçăнман-ха.

Сталин йачĕпе тăракан колхоз 27 гектар, „Канаш" колхоз 8 гектар, „Çăлтăр" колхоз 15 гектар, Кирăв йачĕпе тăракан колхоз 15 гектар кантăр акса, хăйсен планĕсене тултарнă.

Районри 18 колхозра çĕрулми лартса пĕтернĕ. Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз 14 гектар, „Хĕрлĕ Тойçи" колхоз 11 гектар, „Хĕрлĕ йалав" колхоз 14 гектар çинче йаровизациленĕ çĕрулми лартса хăварнă.

Патăрйел районĕ майăн 15-мĕшне ытти тымарçимĕçсене лартас плана 67 процент, çилослăх культурăсем акас плана 49 процент тултарнă.

Н. Пушкин.

Вылăхсене чуптарас ĕç

** Уйкас Кибекри (Шăхасан р.) Тельмăн йачĕпе тăракан колхозра иртнĕ çулта 600 пуç сурăх ытларах искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăварнă. Вăл ĕç ăнăçлă пулни кăçал лайăх курăнчĕ. Çуралакан пӳтексенчен пурĕш те ăратлă йăхсем.

Кăçал райçĕрĕç пайĕ панă план тăрăх, 240 пуç ĕне, 600 пуç сурăх пĕтĕлентерсе хăвармала. Вăл план ытлашшипех тулать, мĕншĕн тесен колхозниксем хăйсен вылăхĕсене пĕтĕмпех искусственнăй майпа пĕтĕлентерсе хăварасшăн тăрăшаççĕ. Халь вылăхсене чуптаракан пункт, Варламăв йулташ йертсе пынипе, вылăхсене чуптарас ĕçе тытăнчĕ.

А. Шорникăв.

** Хырлукассинчи „Заветы Ленина" колхозра (Хĕрлĕ Чутай р.) кĕсресене ăратлă ăйăрпа чуптарса хăварас ĕç анлăн сарăлса пырать. Ку таранччен 15 кĕсре чуптарнă.

Й. Çигайĕв.

Сирĕн ылттăн шеломăрсем,
Польшăран кӳнĕ шчитсемпе сăннăрсем?

Картласа хурăр çĕçенхир хапхисене
Сивĕч çĕмрĕнсемпеле —
Вырăс çĕрĕшĕн,
Харсăр Игăршĕн
Игăрь Свйатославич суранĕсемшĕн!"

8

Сула-шыв те йухмасть ĕнтĕ
Çут кĕмĕл пек йăлтăртатса
Перейаславĕл йеннеле;
Лачака пек йухать Двина
Хайар Полочансем патне,
Ирсĕр сасса илтсе!
Васильќка ывăлĕ [28]
Исаслав кăна
Сивĕч хĕçĕпе йанратрĕ
Литва шеломĕсене,
Хăй аслашшĕ Вçеслав
Мухтавне аркатса,
Анчах хăй те йунпа пĕвĕнсе
Литва хĕçĕсемпе туранса,
Выртса йулчĕ шчитпа витĕнсе
Симĕс курăк çине.
Вара, чунĕ тухас умĕн,
Çапла каласа хăварчĕ:

„Кнљасăм!
Санăн дружинусене
Кайăк çуначĕсем тăхăнтарчĕç,
Анчах унăн йунне
Тискер кайăк çуларĕ!"

Пулмарĕç унта унăн тăванĕсем —
Ни Брйачислав,
Ни тепĕр тăванĕ Вçеслав: [29]
Пĕччченех
Харсăр ӳтĕнчен
Ылттăн шăрçа витĕр
Ахах чунне
Кăларса йачĕ вăл.

Сасăсем салхуланчĕç,
Савăнăç тамалчĕ.
Городенск трубисем
Тӳт кăшкăртаççĕ...

* * *

Ей, Йарослав,
Тата Вçеславăн мĕнпур мăнукĕсем!
Усса йарăр хăвăр йалавăрсене,
Чиксе лартăр çĕре
Мукалнă хĕçĕрсене,

Ма тесен, тухса ӳкрĕр есĕр
Асласусен мухтавĕнчен;
Хăвăр пăлхавăрсемпе
Ирĕк патăр тăшмана
Вырăс çĕрне таптама,
Вçеславăн пурлăхне тустарма:
Сирĕн харкашăвăр пирки тиврĕ те
Половец çĕршывĕн пусмăрĕ.

* * *

Тройанăн сиччĕмĕш ĕмĕрĕнче
Вçеслав тытнă шăпине
Хăй савакан хĕрĕнне.

Унтан учĕ çине утланса
Çĕкĕл пек пĕшкĕнсе ларнă та
Кийĕв хули йеннеле вĕçтернĕ,
Çитсе тĕртнĕ вăл
Сăнă аврипе
Кийĕвăн ылттăн крекине.
Унтан каллех
Чăрсăр тискер кайăкла
Тухса вĕçтернĕ;
Çурçĕрте Белградран вăл
Сенкер тĕтре пек тухса шăвăннă;
Ирхине вара
Каскăч-турттипеле çапса [30]
Новгород хапхисене уçса кĕнĕ,
Йарославăн мухтавне
Çапса сирпĕтнĕ;
Дудуткăран Немигăна ситиччен
Кашкăр пек чупнă...

Немигăра
Етем пуçĕсенчен сарăм сараççĕ,
Хурçă тăпачсемпеле
Авăнне çапаççĕ,
Пурнăçа йĕтем çине хураççĕ,
Чуна ӳтрен сăварса тасатаççĕ.

Ырлăхпа мар акăнна
Çав Немигăн йунлă сыранĕсем,
Акăнна вырăс ывăлĕсенĕн
Шăммисемпеле!

Кнљас Вçеслав
Сынсене сут тăвать,
Кнљассене хуласем халалать,
А хăй каçсерен
Кашкăрла йăртлатать;
Йăртлатса ситрĕ вăл
Автансем автиччен
Кийĕвран Тмуторакане:

Аслă Хорсăн çулне [31]
Кашкăрла вĕткĕнсе
Пӳлсе хучĕ.

Çавă Вçеслав йачĕпех
Полоцкра
Таса Софи чиркӳнче
Ирхи кĕлле кĕме
Чан çапаççĕ,
А, чан сассине
Вçеслав
Кийĕвранах илтет.

Ун хăйулă ӳтĕнче
Чунĕ сивĕч пулин те,
Çапах тăтăш-асапланнă вăл
Инкекрен.

Вара çав кнљаса
Аслă ăрамçă Бойан
Пуçламĕш хут çапла
Такмак каланă:
„Ни чейе сынсем,
Ни сивĕччисем,
Ни кайăкла шуххисем
Турă сутĕнчен хăтăлас çук!"

Пит, йĕме тиветçке Вырăс çĕрне
Хурлăхлă çулсемпе
Малтанхи кнљассене аса илсессĕн!

Пăталама пулман-и вара
Çав Владимĕре
Кийĕв тăвĕсем çумне!
Ак халь ун çар-йалавĕсем
Куçрĕç Рӳрика,
А ыттисем куçрĕç Давида.
Анчах хăйсем халлĕн кăна
Вĕлкĕшеççĕ вĕсен бунчукĕсем!

9.

Сăнăсем мар-ши йурлаç
Дунай çийĕн?
Çук, Йарославнă сассине илтеп еп:
Йалламан куккукла, пит, ирех
Куклатать вăл:

„Куккук пулса вĕçĕм еп, тет,
Дунай шывĕ тăрăх;
Хăнтăр тыттарнă çанăма
Кайал шывĕпеле йĕпетем,
Кнљасăн йун-суранĕсене
Хытса ларнă ӳт çинчен
Шăлса типĕтем..."

Ирех йĕрет-çке Йарославнă
Путивль хӳми çийĕнче
Çапла каласа:

„О çилĕм-çунатăм!
Мĕншĕн ес, пӳлĕхçĕм,
Хиствелĕн вĕрен?
Мĕншĕн лăпкă çунатусемпе
Ман тусăм çарĕсем çине
Ирсĕр çĕмренсем вăрхăтан?
Çитместчĕ-им сана
Çӳлĕ пĕлĕт çинче вĕçнипе,
Кăвак тинĕс çинче
Карапсем хумхатнипе?
Мĕншĕн ес, пӳлĕхçĕм,
Кăлкан тăрăх вĕрсе салатрăн
Манăн савăнăçăма?"

Ирех йĕрет-çке Йарославнă
Путивль хули хӳми синче
Çапла каласа:
„О Днепр ес Славутич! [32]
Чул тусене шăтартăн ес
Половец çĕршывĕ витĕр:
Хумусемпе хумхатрăн ес
Свйатославăн киммисене
Кобйакăн [33] станĕ таранччен:
Çитерсемччĕ ес, пӳлĕхçĕм,
Ман мăшăра та хам пата,
Ирхи шуçăм килес чухне.
Еп ун йатне асăнайса
Тинĕсе куççуль йухтарам мар".

Ирех йĕрет-çке Йарославнă
Путивль хӳми çийĕнче
Çапла каласа:

„О сутă
Виç хут та сутă
Хĕвелĕм!
Кашнинех ăшăтса ес саватăн
Мĕншĕн, хĕвелĕм-пӳлĕхçĕм,
Ман тусăм çарĕсем çине
Хăвăн хĕрӳ хĕмне тăкатăн?
Шывсăр хирте антăхăнса
Кунчĕç вĕсен уххийĕсем,
Салхулăхпа пĕкĕрĕлчĕç
Çĕмрен йĕннийĕсем..."

10

Çурçĕр çине сирпĕнчĕ тинĕс;
Сĕм-тăвăлсем килеç йупаланса:
Турă çул кăтартать
Игăрь кнљаçе

Половец çĕрĕнчен
Вырăс çĕрне,—
Ашшĕн ылттăн кĕреки хушшине.

Сӳнчĕç каçхи шевлесем;
Игăрь пĕр çывăрать,
Игăрь хăй пуçĕнче
Игăрь пĕр çывăрмасть
Хирсене висет:
Аслă Донран пуçласа
Кĕçĕн Донец таран

Ута çурçĕр тĕлĕнче
Йуханшывăн хĕрринчен
Овлур [34] кайнă шăхăртса:
Кнљаса хушать ăсланма...
Кнљас Игăрь çук!—
Тĕсе кăшкăрчĕ:
Çĕр чĕтрерĕ;
Чăштăртатрĕç курăксем,
Тайкаланчĕç
Половецсен ӳплисем.
Кнљас Игăрĕ
Йус пек ыткăнчĕ хăмăшсем патне,
Шур-акăш пек сикрĕ шыва;
Ахар учĕ çине сиксе утланчĕ
Унтан, хăмăр кашкăр пек,
Сиксе анчĕ;
Вĕçтерчĕ вара Донец улăхĕ йеннеле,
Соккăлла вĕçрĕ вăл
Тĕтĕре айĕпе;
Ирхи апата,
Кăнтăрлахи апата,
Каçхи апата
Кайăк-хурсем пере-перĕ тытса.

Игăрь сокăлла вĕççенех
Овлур та кашкăр пек чупать,
Хăйĕн шухă чуппине
Сулхăн сывлăма сирпĕтет;
Хăшкăлтарчĕç вĕсем
Ахар учĕсене!

* * *

Кнљаçе кĕçĕн Донец
Çапла хушрĕ сăмах:
„Игăрь кнљаç!
Сахал мар сан мухтаву
Кончакăн—хурлану,
Вырăс çĕрĕн—хĕпĕртӳ!"
Игăрь калать:
„О Донец!
Санăн та мухтаву сахал мар:
Ес кнљаçе йарăнтартăн

Хумусĕм çийĕнче,
Сырануcем хĕррине
Ăна вальљи
Йешĕл курăк сарса йантăларăн;
Пийĕлерĕн ăна
Йăвăç сулхăнĕсенче
Ăшă тĕтресемпеле;
Сыхларăн ăна
Шывсенче акăшла,
Хумсенче чайкăла,
Çилсенче чернетле [35]

Апла марçке каларĕ
Пуханшыв Стугна:
Йут шыв-шурсене çăтнăскер,
Канăçсăр йухăмпа ыткăнса
Кимĕсене хăйарать
Тĕмĕсем хушшине:
Çампекех çамрăк кнљасе
Роçтислава та
Днепр хупăрларĕ.
Çампа тĕксĕм сыран хĕрринче
Йĕрет Роçтиславăн амăшĕ
Çамрăк кнљаса
Роçтислава асăнса.
Ăна шеллесе салхуланчĕç чечексем,
Йăвăçсем те хуйхăрса
Пуç тайрĕç çĕреле".

* * *

Чакаксем мар-çке чакăлтатаççĕ,
Пыраççĕ Игăрь йĕрĕпе
Гзапала Кончак.

Çăхансем те ун чух кранклатмарĕç,
Чанасем те шăпланчĕç,
Чакаксем те чакăлтатмарĕç,
Сăнчассем те
Чаваланчĕç кăна.

Ула-таккасем, сăмсипе таккаса,
Çул кăтартрĕç шыв патне,
Шăпчăксем савăк йурринпе
Тул сутине пĕлтерчĕç.

Сăмах хушать Гза Кончака:
„Ехер сокăл йăви патне
Вĕçсе пырать пулсан,
Персе тытар ун чĕппине
Хамăр ылттăн çĕмренсемпе!"

Унтан калать Кончак Гзана:

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Игăрь полки çинчен çырнă сăмах

(Й У Л А Ш К И)

Ехер сокăл йăви патне
Вĕçсе пырат пулсан,
Епир, вăл сокăл чĕппине
Хĕр-никепе çыхлантарăр!

Унтан калат Гза Кончака:

Ехер епир пике-хĕрпе
Ăна çыхлантарсан,
Пире нулмĕ вара хамăра
Ни сокăл чĕппи,
Ни илемлĕ хĕр-пики,
Çитменнине тытăнĕçĕ
Половец хирĕнчех кайăксене
Пĕтерме!

11

Çапла каларĕ Бойан
Авалхи саманан йурăçтийĕ,
Ярослав кнаçпала Олег кнаç
Саманин йурăçи
Святославсен çапăçĕвĕ çинчен:

Питĕ йăвăр çăна
Хулпуççисĕр пуç,
Анчах ӳт-пĕве те
Пуççăр питĕ хĕн!
Вырăç çĕрне хурлăх
Игăрсĕр:
Хĕвел йăлкăшат
Пĕлĕтре,
Игăрь кнаç
Вырăç çĕрĕ çинче.

И хĕрсемех йурлаç
Дунай çинче,
Сассисемех йухаç тинĕс урлă
Киевва çитиччен:

Борисев сăрчĕпе
Игăрь пырат
Таса турă амăшин
Сӳлĕ тăрăлă чиркӳне:
Çĕршыв савăнчĕ кăмăлтан!
Хавасланчĕç хуласем!

Йурларăмăр йурă
Ватă кнаçсене мухтаса,
Мухтар çамрăккисене те:

Мухтав
Игăрь Святославича,
Буй-тур Всеволода,
Владимĕр Игăревича!

Сывлăх пултăр
Кнаçсемпе дружинисене,
Христиансемшĕн хирсенче
Йрсĕр полксемпеле
Çапăçнăскерсене!
Кнаçсене мухтав,
Дружинăна
Чап-чапах та
Мухтав!

Ил. Тукташ,
Иван Ивник куçарнă.

Ăнлантарнисем:

19. НАРДУС — ыта йевĕрлĕ тискер кайăк.

20. ШАРУКАН — половецсен ханĕ, хăйне парăнтарнăшăн 12 ĕмĕр пуçламĕшĕнче вырăссене питĕ хайаррăн тавăрнăскер.

21. Кĕçĕн кнаççен Игăрпе Всеволодăн, хăйсем тĕллĕн кăна тăшмана çĕнтерме вăй çитмен, çавăнпа та вĕсем çĕнтерӳ чапне те йаме пултараймап.

22. Подлинникра „сирĕм сум", „алă сум" тенĕ вырăнне „ногата", „резана" тенĕ сăмахсем тăрассĕ. Ку сăмахсем вăл укçа хисепне кăтартаканскерсем пулнă. Халĕхи укçа шучĕ çине куçарсан вăл 20 пуспа 50 пус йахăн пулат.

23. Болгарсем çине похода аслă кнаç Всеволодпа пĕрле Глеб Ростиславич ывă-...

24. РЮРИКПА ДАВИД Ростиславичсем — Владимир Мономахăн мăнукĕсен ачисем.

25. Вунултăмĕш пункта пăх.

26. РОМАН МСТИСЛАВИЧ — Владимиро-Волынски кнаçĕ: Мстислав Йарославич — унăн тăрту тăвакан тăванĕ Луцк кнаçĕ.

27. Ингварпа Всеволод Йарославичсем сӳлте асăннă Мстислав Йарославичăн тăванĕсем.

28. ИСАСЛАВ ВАСИЛЬКОВИЧ — Полоцк кнаçĕ, половецсемпе çапăçнă чух вилнĕ Всеслав мăнукĕн ывăлĕ.

29. БРЯЧИСЛАВПА ВСЕСЛАВ — вырăс кнаçĕсем.

30. КАСКАЧ-ПУРТА — çекĕрă, авалхи çар сынинсен çапăçу хатĕрĕ.

31. ХОРС — йазычниксем пуççанса пурăннă хĕвел-турă.

32. ДНЕПР СЛАВУТИЧ — Днепăрăн авалхи йачĕ.

33. КОБЯК — половецсен ханĕ.

34. ОВЛУР — половец çынни, Игăре ...

35. ЧЕРНĔТ — кайăк йачĕ, кăвакал йевĕрскер.

36. СОКАЛ — Игăрь СОКАЛ ЧĔППИ — Игăрĕн ывăлĕ, Владимир Кончак Владимира хăйĕн хĕрне качча парасшăн пулнă.

Украина уйхирĕсенче

Çăмăрсем çунă хыççăн, Украинăра калчасем питĕ лайăх чĕрĕлесçĕ. Одессă, Николайĕвск тата Днепропетровск облăçĕсенче кĕрхи ыраш калчин çӳллĕшĕ 60—85 сантиметра çитет тата пучах кăларнă та ĕнтĕ. Кĕрхи тулă калчи чăшăлах симĕсленнĕ. Ун калчине вăтамран ытларах тата лайăх тесе хаклаççĕ.

(ТАСС).



Китайри вăрçă.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Китай çарĕн боецĕ.

(Союзфото).

Китайри вăрçă

Амойа (Кăнтăр Китай) хӳтĕлекен Китай çарĕсем, командованин приказĕ тăрăх, оборонăн çĕнĕ линийĕ çине кайала чакнă. Çапăçусенче аманнă салтаксемпе партизансем хăйсен тĕп вăйĕсемпе пĕрле кайала чакма ĕлкĕрейменскерсем, хăйсен позицисене сыхласа паттăррăн вилнĕ. Йапонецсем Амойра нихăçан илтмен тискерлĕхпе ирĕкĕрлеççĕ тата çаратаççĕ. Йапонецсем Амойра лăпкăн пурăнакан халăхсене 7 пин çынна йахăн вĕлернĕ.

Амой çине Йапони самолĕчĕсем бомбăсем пăрахнипе 3 пин çынна йахăн лăпкăн пурăнакан халăхсене вĕлерне тата амантнă. Шанси провинцийĕнче (Çурçĕр Китай) Йапони çарĕсем вĕлерекен газсем йараççĕ. Лиши хула çине атакă тунă вăхăтра Китай çарĕсем йапонецсенчен хими снарйачĕсене, куçуç йухтаракан газсем тултарнă бомбăсене тата çынна вĕлерекен йапалăсем тултарнă баллонсене туртса илнĕ.

Çурçĕр Китайра, Хебей провинцийĕнче партизансем 44 уйеса хăйсен аллине тытса тăраççĕ. Ку провинцире лайăх хĕспăшлалланнă ... Китай çарĕсем тата 500 пинрен кайа мар партизансем çапăçаççĕ.

(ТАСС).

Йапони авиацийĕ тапăнни

Майăн 14-мĕшĕнче Йапонин 54 самолĕчĕ 12 сехет хушши Çуйчжоу çине бомбăсем пăрахнă. Хула çине вут тивретсе çунтаракан бомбăсем 280 ытла пăрахнă. Вĕлернисемпе аманнисем 800 çынна йахăн шутланаççĕ. 3000 çурт аркатнă. Лăпкă пурăнакан темиçе пин çын нимĕнсĕрех тăрса йулнă.

Йапони самолĕчĕсем çакăн пекех Сӳчжоу çине (Сӳчжоу хулинчен кăнтăрала) бомбăсем пăрахнă, 300 çынна вĕлернĕ.

(ТАСС)

Изаи йачĕпе иртекен пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕ усăлна

Исаак Михновски тухса вылянă

Майăн 16-мĕшĕнче Брӳççелре (Бельги) Ежен Изаи йачĕпе иртекен пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕн пĕррĕмĕш турĕ пуçланнă. Вал. Совет пианисĕ Исаак Михновски тухса выляннипе пуçланнă.

Михновскисĕр пуçне, майăн 16-мĕшĕнче ирхине тата 10 çын тухса вылянă.

(ТАСС).

Икĕ мĕлйун вĕренекен ачасем пионерсен лагерĕсенче пулаççĕ

Кăçал профессилĕ союзсен комсомол организацисемпе, сывлăха сыхлаç тата çутĕç органĕсемпе пĕрле икĕ мĕлйун йахăн вĕренекен ачасене пионер лагерĕсене йараççĕ.

Профессилĕ Сойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн Президиумĕ Сойузсен Тĕп Комитечĕсене социаллă страховани валли уйăрнă укçаран 1938 çулта пионер лагерĕсене тытса тăма 139 мĕлйун та 300 тенкĕ йама, вĕсене организацилеме тата йĕркелеме 20 мĕлйун тенкĕ йама ирĕк панă. Кунсăр пуçне, çавăн валлийех профсойузсен бӳджетĕнчен 33 мĕлйун та 771 пин тенкĕ уйăраççĕ.

Пионерсен лагерĕнче ачана усранишĕн ашшĕ-амĕш ĕçлесе илнĕ укça çемйен пĕр членĕ çине тивнинчен 75 процентне илеççĕ.

(ТАСС).

Шкулсенче вĕренӳ çулĕ вĕçленет

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн кăтартăвĕ тăрăх, пуçламĕш шкулсенчи, туллимар тата вăтам шкулсенчи пĕррĕмĕш—виççĕмĕш классенче вĕренӳсем майăн 20-мĕшĕнче пĕтеççĕ.

Пуçламĕш йе туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем свидетелства, вăтам шкултан вĕренсе тухнисем аттестат илеççĕ.

Тĕп предметсемпе тата хăйне тыткаланипе „отличнă" паллăсем, ытти предметсемпе „хорошо" паллăсем илнĕ вĕренекенсем уйрăм аттестатсем илеççĕ. Вăл вĕсене аслă шкулсене екзаменсĕрех кĕме права парат.

(ТАСС).

Физкультурăпа спорт хроники

Футбол вăййипе хулари маттир вырăншăн. Майăн 15-мĕшĕнче „Буревестник" тата „Учител" обществисен командисем выляреç. Вăйă 1:0 шутпа „Буревестник" команди çĕнтернипе пĕтрĕ.

„Спартак" футбол командипе „Динамо" команди майăн 16-мĕшĕнче выляреç. 5:0 шутпа „Спартак" командийĕ çĕнтерчĕ.

„Спартак" обществин Чăваш Совечĕ майăн 7-мĕшпе 13-мĕшĕсен хушшинче кустсенчи физкультура инструкторĕсемпе вырăнти пысăк коллективсенчи физкультура организаторĕсен семинарне туса ирттерчĕ. Унта РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисемпе Конституцисене вĕренĕ. Физкультурниксем хушшинче агитаципе массăлă ĕç сарса пырасси çинчен сӳтсе-йавнă.

„Спартак" обществин Чăваш Совечĕ майăн 25-мĕшĕнчен пуçласа вырăнти физкультура организаторĕсен 12 кунлăх курсне иртерет. Курсра 40 физкультура организаторĕсем пуххăнмала.

Х Р О Н И К А

ССРСойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **И. Г. Макарăв** йулташа Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулма çирĕплетнĕ.

— ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ **К. И. Бутенко** йулташа йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн заместителĕ ĕçĕсенчен хăтарнă.

(ТАСС).

Заметкăсем тăрăх

Н. П. Ухварин йулташ, Турхан районĕнчи Сĕнйал йалсовет председателĕн заместителĕ Серзӳков ирсĕр ĕçсем туни çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

„Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ çак заметкăна Турхан районĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме йачĕ.

Заметкăри фактсем тĕрĕс, Серзӳкова ответ тыттараççĕ — тесе пĕлтерет Турхан районĕнчи прокурор.

Пулни-иртнисем

Майăн 12-мĕшĕнче Шупашкарта, хулари комунхоз автомашинĕпе çӳрекен шофер И. М. Гаврилăв, машинăпа çӳремели йĕркене пăсса ытлашши хытă кайса, А. Николайĕв йатлă ачана таптаса вĕлернĕ. Гаврилăва арестленĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Хусанти В. В. Куйбышĕв йачĕпе тăракан

государствăн финанспа економикă институчĕ

СТУДЕНТСЕНЕ КĔРКУННЕ ИЛЕССИ ÇИНЧЕН

ПĔЛТЕРЕТ

Институт государствă дохочĕсен, налогсен, тĕрлĕрен сборсен тата бюджетпа кредит ĕçĕсенче ĕçлекен пысăк квалификацилĕ финансиспа економиссене хатĕрлет.

Института ССР Союзĕнчи пур граждансене те (арçынсене тата хĕрарăмсене) 17 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисене (вунă çуллă шкул, рабфак, техникум, йе екстернат йĕркипе вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен илнĕ аттестат пур пулсан) илеççĕ. Института илнĕ чух çак предметсем тăрăх испытани тăваççĕ: вырăс чĕлхи (грамматикă, литературă, çыру ĕçĕ), политграмăтă, математикă, физикă, хими, географи тата вĕренме кĕрекен хăй килĕшнĕ тăрăх пĕр-пĕр ютçĕршыв чĕлхи (англи, французд йе нимĕç чĕлхи).

Испытанире вырăс чĕлхипе математикăна сăмахпа ыйтаççĕ тата çыртараççĕ; ытти предметсене сăмахпа ыйтаççĕ.

Зайавленисем августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ, испытанисем августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшĕччен пулаççĕ. Августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 25-мĕшĕччен института илнисене студентсен шутне кĕртеççĕ.

Зайавленисене институт директăрĕ йачĕпе çак документсемпе пĕрле йамала:

Тĕплĕн çырнă автобиографи, вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат, паспăрта пĕрле илсе пымала, виçĕ фотокартăчкă—кашни çине хăй ал пусса государствă учрежденийĕ çирĕплеттерни пулма кирлĕ (картăчкăна çара-пуçăн, 3×4 см пысăкĕш ӳкерттермеле) тата çар тивĕçлĕхне (военнообйазаннăйсен) кăтартакан справкă.

Республик тулашĕнчен вĕренме кĕнисем валли общежити пулат.

Ыйтусемпе зайавленисене çак адрĕспе йамала:
Татарская АССР, гор. Казань, ул. Карла Маркса, дом № 43, Финансово-экономический институт им. В. В. Куйбышева.
ДИРЕКЦИ.

„Чăвашвăрманпром" трестне

Вăрманпромхозсенче тата механизацилен вăрман пунктисенче йалан тата вăхăтлăх ĕçлеме

шоферсем кирлĕ

Шоферсене валли уйрăм пӳлĕмсем, хваттерсем пур. Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Урицкайа урамĕ, 36. „Чăвашвăрманпром" тресчĕ, кадрсен пайĕ. Йе тата тӳрех: Шăмăршă вăрманпромхозне, почтă уйрăмĕ Шăмăршă, рабочи посĕлакĕ; Йĕпреç вăрманпромхозне, Йĕпреç ст. Хусан чукунçулĕ; Улатăр вăрманпромхозне, Улатăр хули, Казанскайа урам, 36; Кирери механизацилен вăрман пунктне, Кире станци, Хусан чукунçулĕ; Вăрнарти вăрманпромхозне, Вăрнар станци, Хусан чукунçулĕ.

„Чăвашвăрманпром" тресчĕн кадрсен пайĕ.

3—2.

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТРА

Малтан ĕçлесе пурăннă рабочисене—ĕçукçи илейменнисене

Укçа илме пыма чĕнеççĕ

Укçа илме рабочин хăйĕн пымала йе почтă урлă çырупа хăш вăхăтра, мĕнле строительствăра, хăш бригадăра тата килти тĕрĕс адрĕсе тĕплĕн çырса пĕлтерсен, (пĕрлех мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан расчот кĕнекине йе расчот хутне йамалла), укçа йараççĕ.

Претензисем тăратмали срук çак пĕлтерӳ çапăннă кунранпа 1938 çулхи октябĕрĕн 1-мĕшĕччен.

Чăвашстройтрест.

3—1

„Росснабсбыт"

Чăваш республикĕнчи уйрăмне

бухгалтĕрсем, счетоводсем тата кассир кирлĕ.

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

Шупашкар, Хĕрлĕ площчĕд, 16.
Тел. № 1—13 тата 5—10.

2—1

П Ĕ Л Т Е Р Н И

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи майăн 5-мĕшĕнче 435-мĕш № постановленийĕ тăрăх вылăх-чĕрлĕх сутăн илме организацилекен йармăркăсем Чăваш республикĕнче çак срукçенче тата пунктсенче пулса иртеççĕ.

Патăрйеленче—1938 çулхи майăн 18, 19, тата 20-мĕш кунĕсенче.
Выл-пасарĕнче (Елĕк районĕ)—майăн 19, 20 тата 21-мĕш кунĕсенче.
Нурăсра (Вăрнар районĕ) — майăн 24, 25 тата 26-мĕш кунĕсенче.
Шупашкарта—майăн 27, 28, 29 тата 30-мĕш кунĕсенче.
Çĕрпӳре —1938 çулхи ийунĕн 2, 3 тата 4-мĕш кунĕсенче.
Кавалта — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Йелчĕкре — ийунĕн 9, 10 тата 11-мĕш кунĕсенче.
Улатăрта — ийунĕн 1,2 тата 3-мĕш кунĕсенче.
Пăрачкавра — ийунĕн 4-мĕш тата 5-мĕш кунĕсенче.
Хĕрлĕ Чутайра — ийунĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенче.
Канашра — ийунĕн 12, 13 тата 14-мĕш кунĕсенче.

Вылăх-чĕрлĕх сутакан колхозсене, колхозниксене тата ĕççынни йединоличниксене валли суту-илӳ организацилемс йармăркăсене çакăн пек таварсем кӳрсе килеççĕ: мануфактурă, трикотаж, çĕлене платйĕсем, çипсем, пуç тутрисем, сăран атă-пушмак, резинă калушсем, т. ыт те.

Вылăх-чĕрлĕх йе кайăк-кĕшĕк сутакан кашни тенкĕ пуçне 50 процентлăх тавар илме пултарат.

Вылăх-чĕрлĕх сутма догăвăр тунă колхозсем, догăвăр шучĕпе сутмали вылăх-чĕрлĕхе йармăрка илсе тухса сутма пултараççĕ.

Вылăх-чĕрлĕхе государствă валли сутăн илессине йармăркăсенче Потребкооперацие Вылăх хатĕрлекен кантурĕсем организацилеççĕ, вĕсемех вылăхсене йышăнмали пунктсем организацилеççĕ.

Йармăркăсенче тĕрлĕрен таварсене сутассине те анлăн организацилеççĕ: бакалейă таварĕсем, гастрономи, кондитер çимĕçĕсем, кӳлмели таврашсем, галантерейă, парфӳмери тата вырăнсенче тунă таварсем пулаççĕ. Столовăйсем, ресторансем, чайнисем пулаççĕ.

Чăваш АССР Суту илӳ Халăх Комиссариачĕ.
Чăвашпотребсойуз.

2—2

ЧУВАРЛЕЙРИ САНАТОРИНЕ СЫВАЛМА КАЙАКАНСЕН

ç а к н а п ĕ л м е л е:

сывалма путĕвкăсемпе пынисене кашни уйăхрах 1-мĕш числаран пуçласа 5-мĕшĕчен йышăнаççĕ. Ку срук иртсен санаторине йышăнмаççĕ.

ДИРЕКЦИ.

Шупашкарти корь станцине

йун паракансем кирлĕ.

Йунă сывлăха сийен кӳмеле мар 100—300 кубла сантиметр таран паме йурат.

100 кубла сантиметр йуншăн

30 тенкĕ тӳлеççĕ.

Кашни кунах (канмали кунсемсĕр пуçне) ирхине 10 сехетрен пуçласа 2 сехетчен йышăнаççĕ.

Адрĕс: Красноармейскайа урам, № 3 Сивчир станцийĕ.

2—1

СОЙУЗОРГУЧОТ

Вĕренӳ Комбиначĕн Чăваш филиалĕ

малтан вĕреннĕ курсантсене займ облигацийĕсене алла илейменнисене облигацисене илме пыма чĕнет. Хăйсен килме май килменнисен халĕхи адрĕсĕсене пĕлтермеле. Почтăпа йараççĕ.

„ГЛАВКОЖОБУВЬПРОМ-ăн"

Чăваш республикĕнче çĕнĕрен организацилене суту-илӳ базине

Бухгалтĕр (таварсен группи),
Счетовод-кассир,
Ĕççене туса пыракан—машинисткă,
Шофĕр (ЗИС—5 автомашинă çинче ĕçлеме),
Браклакан — специалис (атă-пушмаксем тăрăх).

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар, Заводскайа урам, 12 (Симĕс пасарта) „Главкожобувьпром" бази

ФИЗКУЛЬТУРĂН

Кĕçĕн преподавателĕсене тата инструктăрĕсене вĕрентсе хатĕрлекен

6 уйăхлăх курса илме

испытанисем 1938 ç. майăн 19—20-мĕшĕсенче пулаççĕ

Шупашкар, Автоклуб çурчĕ (К.-Либкнехт урамĕ, 14).

Испытани майăн 19-мĕшĕнче 11 сехетре кăнтăрла пуçланат.

Испытани программи:

1. Вырăс чĕлхи, 2. Политграмăтă, 3. Математикă—туллимар вăтам шкулăн 7 клас программипе.

Практикăлă дисциплинăсем:

Çăмăл атлетикă тата гимнастикă ГТО комплексĕ чухлĕ. Испытание тăма ирĕк панисем (чĕннисем) кăтартнă срука вăхăтра çитмеле.

Испытание пыма тухакан çул укçине, хваттершĕн тата апатланма тухакан расхутсене испытани вăхăтĕнче физкультура комитечĕ тӳлемест.

Занятисем кăçалхи майăн 25-мĕшĕнче Йетĕрне хулинче пуçланаççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.

2—2

Пĕлтерни

Шупашкар хулинчи предприйатисен, учрежденисен тата организацисен бухгалтĕрĕсен „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займа" мĕн чухлĕ сарни тата облигацийĕсене алла пани çинчен итоклă отчотсем кăçалхи ийунĕн 1-мĕшĕнчен тĕп перекет кассине тăратмала (отчот формисене панă).

Учрежденисем ку отчота майăн 20-мĕшне тăратма пултарайманнине пулсан, займ облигацийĕсене перекет касинчен пĕтĕмпе миçе тенкĕлĕх илни çинчен тата облигацисене миçе тенкĕлĕх алла пани çинчен сведĕнисем çав срука тăратмала.

Бухгалтĕрсемпе комсодсен алла памасăр йулнă облигацисене пĕтĕмпех перекет кассине майăн 20-мĕшне тавăрса памала. (актпа 2 ексемплйар спискăпа пĕрле)

Шупашкарти 60-мĕш №-лĕ Тĕп Перекет касси

2—1

Пĕлтерни

Майăн 19-мĕшĕнчен пуçласа (кăçал) Кӳкеçре, Чăваш АССР госбанкăн уйрăмĕ ĕçлеме тытăнат. Шупашкар районĕнчи предприйатисем, учрежденисем тата организацисем (Шупашкар хулинче шутланманнисем) пурте кăçалхи майăн 19-мĕшĕнчен укçа-тенкĕ ĕçĕсемпе Госбанкăн Кӳкеçри уйрăмне куçаççĕ.

Госбанкăн Чăваш республикĕнчи кантурĕ.

Шупашкарти „Кожупряжь" ертелĕнче

Малтан ĕçлесе пурăннисен „ССР Сойузĕн Оборонине тĕреклетмели займ" облигацисене илме кăçалхи майăн 20-мĕшчен пымала. Ку срук иртсен облигацисене перекет кассине параççĕ.

ПАЙАН ТЕАТРСЕНЧЕ:

ПАЙАН КИНО-ТЕАТРТА — саслă илемлĕ фильм **„Катерина"**.

Уполномоченный Чувашглавтита. № 247.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 400.